25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 МАРТ 10 ЫТЛАРИКУН 58 (6083) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççыннин депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

6. Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз (колхоз председателĕ **А. Д. Васянин**, агроном **Н. И. Яхворов**). Колхоз пур культурăсен хирĕ тата мĕнпур çĕр хатĕрлес вăрлăх хатĕрлесе пĕтернĕ. Вăрлăхне тасатнă, пур сенчен те аван юрăллă тунă. Ытти колхозсене вăрлăх парас ĕçре 550 центнер сĕлĕ, 310 центнер тулă тата 105 центнер вика уйăрса пачĕ. Ялхуçалăх машинисене, транспорт инвентарьне, кӳлмелли хатĕрсене юсанă. Колхоз уя 4.200 лав тислĕк кăларнă, 600 центнер минераллă удобренисем турттарса килнĕ.

Суракине хатĕрленес ĕçре уйрăмах **А. Д. Ашанин, В. С. Наратин** тата **С. А. Ягранин** бригадисем лайăх ĕçлерĕç.

7. Красноармейски районĕнчи Чукасси ялсоветĕнчи «Труженик» колхоз (колхоз председателĕ **С. Т. Тимофеев**). Колхоз вăрлăха пĕтĕмпех тасатнă, сортланă, вăрлăхăн страховой фончĕсене тунă. Плугсене, сеялкăсене, сӳресене тата ытти ĕç хатĕрĕсене юсанă.

Колхоз уя 1080 лав тислĕк кăларнă, 20 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ, минераллă удобренисем турттарса килнĕ.

8. Красноармейски районĕнчи Алманчă ялсоветĕнчи «Родина» колхоз (колхоз председателĕ **С. Ф. Никитин**). Колхоз вăрлăх фончĕсене, вăрлăхăн страховой фончĕсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе тунă. Ялхуçалăх тата транспорт инвентарьне çителĕклĕ, пурте тĕрĕс-тĕкел. Уя 800 лав тислĕк кăларнă, 22 центнер кĕл, 20 центнер [illegible] тислĕкĕ пухнă, 30 центнер минераллă удобренисем турттарса килнĕ.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Штурмовой авиацин 4-мĕш, 65-мĕш, 174-мĕш, истребительнăй авиацин 6-мĕш, 7-мĕш, 120-мĕш, 69-мĕш, 44-мĕш, 55-мĕш, бомбардировочнăй авиацин 43-мĕш, 33-мĕш, 5-мĕш полкĕсенчен гвардейски полксем тăвасси çинчен

Тăшман совет çĕршывне, нимĕç захватчикĕсемпе хирĕç пыракан çапăçусенче штурмовой авиацин 4-мĕш, 65-мĕш, 174-мĕш, истребительнăй авиацин 6-мĕш, 7-мĕш, 120-мĕш, 69-мĕш, 44-мĕш, 55-мĕш, бомбардировочнăй авиацин 43-мĕш, 33-мĕш, 5-мĕш полкĕсем паттăр тата организациллĕ пулнине кăтартрĕç. [illegible]

Çавăн [illegible] паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă пулнăшăн [illegible] гвардейски полксем тунă. Урăхла каласан:

1) Штурмовой авиацин 4-мĕш полкĕнчен—штурмовой авиацин 7-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ Совет Союз Геройĕ подполковник **С. Г. Гетьман**.
2) Бомбардировочнăй авиацин 5-мĕш полкĕнчен—бомбардировочнăй авиацин 8-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **Г. С. Кучеров**.
3) Истребительнăй авиацин 69-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 9-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **Л. Л. Шестаков**.
4) Бомбардировочнăй авиацин 33-мĕш полкĕнчен—бомбардировочнăй авиацин 10-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **Ф. С. Пушкарев**.
5) Истребительнăй авиацин 44-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 11-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **В. С. Благовещенский**.
6) Истребительнăй авиацин 120-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 12-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **А. С. Писанко**.
7) Бомбардировочнăй авиацин 43-мĕш полкĕнчен—бомбардировочнăй авиацин 13-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **И. Г. Чук**.
8) Истребительнăй авиацин 7-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 14-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **Г. М. Галицин**.
9) Штурмовой авиацин 174-мĕш полкĕнчен—штурмовой авиацин 15-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **С. Н. Поляков**.
10) Истребительнăй авиацин 55-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 16-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **В. П. Иванов**.
11) Штурмовой авиацин 65-мĕш полкĕнчен—штурмовой авиацин 17-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **В. И. Белоусов**.
12) Истребительнăй авиацин 6-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 18-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **С. И. Чертов**.

Асăннă полксене Гварди ялавĕсем пама.

Хĕрлĕ Çар артиллерийĕн инженерно-технически составне çар званийĕсем парасси çинчен

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн постановленийĕ тăрăх, Оборона Халăх Комиссарĕ çапла приказ панă:

1. 1942 çулти апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Хĕрлĕ Çар артиллерийĕн инженерно-технически составне çак çар званийĕсене кĕртес:

Техник-лейтенант;
Старши техник-лейтенант;
Инженер-капитан;
Инженер-майор;
Инженер-подполковник;
Инженер-полковник;
Артиллерийă инженернăй службин генерал-майорĕ;
Артиллерийă инженернăй службин генерал-лейтенанчĕ;
Артиллерийă инженернăй службин генерал-полковникĕ.

2. Фронтсен, округсен тата армисен çар совечĕсене [illegible]

Инженерно-технически состав çинчен [illegible] Хĕрлĕ Çар Артиллерийĕн [illegible] 1942 çулти мартăн 25-мĕш [illegible]

[illegible]

3. Артиллерийă фронтра [illegible]

4. Хĕрлĕ Çар артиллерийĕн инженерно-технически составĕ [illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç, çапăçса, наступлени туса пынă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн чăсĕм фронтăн уйрăм участокĕсенче малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав хаяр çапăçусенче противника пысăк çухатусем кӳнĕ.

Мартăн 6-мĕшĕнче нимĕçсен 35 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 7-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Мартăн 6-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăсĕсем нимĕçсен 4 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 210 автомашинине, боеприпассем турттарса пыракан 125 лавне, горючи тултарнă 4 автоцистернине, 7 орудине, зенитнăй пулеметсен 11 точкине, 42 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, чугунçул çинчи 14 вагона çĕмĕрнĕ, противникăн 100 юланутçине тата пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче малтанхи кун халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ пирĕн войскăсене хирĕç нимĕçсен чăсĕсем контратака пуçласа янă. Советăн артиллеристĕсемпе пулеметчикĕсем, нимĕçсен танкĕсемпе вĕсем хыççăн пыракан пехотине çывăха ярса, вĕсем çине вăйлăн пеме пуçланă. Противник çапăçу хирне хăйĕн çĕмĕрĕлнĕ икĕ танкне тата салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине яхăн пăрахса хăварса, каялла чакнă. Нимĕç оккупанчĕсен винтовкисемпе пулемечĕсене тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалне нумай тытса илнĕ.

* * *

С. Р. Хаба политрук ертсе пыракан красноармеецсем-пулеметчиксем (Хĕвеланăç фрончĕ) тăшманăн пысăк чăсĕн атакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирне противник хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 150 виллине яхăн пăрахса хăварнă.

* * *

Смоленск партизанĕсен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ противникăн чĕрĕ вăйĕпе çар техникине ăнăçлăн пĕтерсе пырать. Отряда организациленĕренпе партизансем пин нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 1074 çынна пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсем хушшинче çаксем пур: 18 ручной пулемет, 16 станковăй пулемет, 148 винтовка, 26 автомат, 330 ручной граната, 5 миномет, 23.000 патрон, пĕр оруди, грузсем тиенĕ 58 лавпа 7 автомашина, 71 лаша. Партизансен отрячĕ тăшманăн автомашинисене нумай пĕтерсе тăкнă тата кĕперсемпе складсене темиçе çĕрте сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 132-мĕш дивизийĕн 436-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран тыткăна парăннă салтак Пауль Порумбак çапла каласа панă: «Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче эпĕ маршевăй батальонпа пĕрле Севастополь патĕнчи фронта килсе çитрĕм. Пире Румыни урлă илсе килчĕç. Николаев хулинче эпĕ персе вĕлернĕ вырăссен списокĕсене урамсенче çыпăçтарса тухнине куртăм, çав персе вĕлернĕ çынсем хушшинче врачсем те, инженерсем те, рабочисемпе служащисем те пурччĕ. Салтаксем мана Николаев хулинче гестапопа жандармери хĕрарăмсемпе ачасене нумай персе вĕлерни çинчен каласа пачĕç. Пирĕн маршевăй батальона нимĕçсен 132-мĕш дивизийĕ çумне хушрĕç, Севастополь патĕнче çав дивизин питĕ пысăк çухатусем пулнă. Пирĕн полкăн пĕр батальонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç, кайран вара унăн ячĕ те юлмарĕ; ытти батальонсенче, вăтамран шутласан, кашни ротăра 40-шер çын кăна юлнă. Германире халăх чăтма çук асаплă та йывăр пурнăçпа пурăнать. Манăн килте асап курса пурăнакан аннен урана тăхăнмалли нимĕн те çукчĕ, вăл кивĕ ботинка та тупса илме пултараймасть. Çавсене чăтса тăраймасăр, эпĕ вăрçăн хăрушлăхĕсенчен мĕнле майпа та пулсан çăлăнма шут тытрăм. Карасубазарта эпĕ хамăрăн чăсран юриех юлтăм та Севастополь патне çитиччен пĕр уйăх иртрĕ. Февралĕн 12-мĕшĕнче çĕрле эпĕ хамăн хĕçпăшала илсех фронт урлă каçрăм та пĕр минометнăй расчетри красноармеецсене тыткăна парăнтăм. Хăйсен подразделенийĕсене шыратпăр тесе нимĕн тумасăр сĕтĕрĕнсе çӳрекен нимĕç тата румын салтакĕсем Крымра питĕ нумай. Чăннипе илсен, çав салтаксем вĕсем урăх вăрçасшăн мар тăракан çынсем».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Эрих Ульке çумĕнче вăл Эрна Шоблик патне яма хатĕрленĕ çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «Вырăссен самолечĕсем пире пачах та канăç памаççĕ. Пĕтĕм фронт тăршшĕпех хăрушă сасă кĕрлесе тăрать. Вырăссем пур çĕрте те фронта татса кĕресшĕн, чăн та вĕсем çавна ăнăçлăн туса пыраççĕ. Пур çĕрте те пирĕн хамăрăн вилнĕ е аманнă çынсемшĕн кулянма тивет. Суранланнисен уйрăмах пысăк хĕн-хур тӳсме тивет. Нумай чухне вĕсене нимĕнле пулăшу та памаççĕ».

* * *

Хусан хулинчи тир тăвакан комбинатра совет патриоткисем чаплăн ĕçлеççĕ, 100 çын ытла хăйсен ĕç нормисене кашни сменăрах икĕ-виççĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Вĕсем хушшинче Бикмулина, Сайфутдинова, Хасанова, Сафина, Жуланова, Нигманулина тата ытти нумай стахановкăсене палăртмалла. Комбинат коллективĕ фронт панă заказсене срокченех пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе продукци туса кăларассине чылаях ӳстернĕ.

Мартăн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче совет войскисем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса наступлени туса пынă.

* * *

Нимĕçсен инçетри тылран пырса çитнĕ чăсĕсем, 2 кун хушши çапăçса, совет войскисем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан С. пункта (Хĕвеланăç фрончĕ) каялла туртса илме хăтланнă. Противник хаяррăн контратака туни унăн ăнăçусăр вĕçленнĕ. Пирĕннисем артиллерирен тата пулеметсенчен тĕл персе тăнипе нимĕçсен ирĕксĕрех каялла чакмалла пулнă, çапăçу хирне вĕсен çĕршер вилесем выртса юлнă. Виççĕмĕш кунĕнче ирхине тăшман кĕтмен çĕртенех пирĕн боецсем наступлени тума тытăннă, хăвăрттăн пырса çапнипе нимĕçсене каялла чакарнă, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ тата нимĕçсен 3 танкне, 9 орудине, 13 пулеметне, боеприпассем тиенĕ 26 автомашинине тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Коваль юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн подразделени (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсен пехоти вырнаçса тăнă К. ятлă ял çине сасартăк пырса тапăннă. Нимĕçсем йĕркесĕр перкелесе, çапăçу вырăнĕнче 60 виле, 3 оруди, 16 пулемет, 6.000 патрон тата ытти япаласем пăрахса хăварса, гитлеровецсем каялла чакнă. 14 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Старши сержант Кривохижке танкĕн экипажĕ çĕрлехи çапăçура нимĕçсен 5 танкне аркатнă, пĕр орудине пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотин пĕр взводне сапаласа янă.

* * *

Старши лейтенант Граняк подразделенийĕнчи артиллерист-зенитчиксем (Калинин фрончĕ) тăшманăн 2 самолетне персе антарнă, нимĕçсен 4 летчикне тыткăна илнĕ.

* * *

Украина партизанĕсен темиçе отрячĕ, тăватă уйăх хушши çапăçса, тăшманăн 1.674 салтакне, 53 офицерне пĕтерсе тăкнă тата 14 салтакпа 7 офицера тыткăна илнĕ. Совет патриочĕсем нимĕçсенне боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 30 грузовой автомашина ытла, 40 лав, горючи тултарнă 14 цистерна, чугунçул кĕперĕ, динамитсен складне, çăкăр пĕçерелелли 2 пекарньăна тата армана сирпĕнтернĕ. Партизансем нимĕçсен дивизийĕн продовольстви хунă пысăк складне çунтарса янă. Отрядсем тытса илнĕ трофейăсен шутĕнче 21 станковăй пулемет, 2 ручной пулемет, 7 автомашина, штаб документĕсем тиенĕ 2 лав, 2 миномет, пистолетсем, нумай патронсем т. ыт. тĕрлĕ хĕçпăшал пур.

* * *

Нимĕçсен 108-мĕш дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ поляк Франц Яблонка çапла каласа панă: «Поляксем нимĕçсен çарĕнче службăра тăрасшăн мар тата Российăна хирĕç çапăçасшăн мар. Юлашки вăхăтра пирĕн взводран 8 поляк тарчĕ. 3-мĕш ротăри 22 çулти поляк салтакне, тарăхса çитнĕ тирки çакăнса вилме тăнăскерне, арестленĕ, темиçе кун иртсен военно-полевой суд ăна персе вĕлермелле тунă. Нумаях пулмасть пирĕн подразделенире çакăн пек ĕç пулчĕ. Маршалек лейтенант Франчук Лапинский салтака-поляка тытса чарнă та ăна устава пăснăшăн ятлаçма тытăннă. Лапинский хăйне тем те пĕр каласа хăратнине итленĕ, кайран лейтенанта ĕнсерен ярса илнĕ те ăна темиçе хутчен питĕнчен юр ăшне чике-чике кăларнă. Лапинские арестленĕ, икĕ эрне тытса усранă, кайран вара суд пуличчен кăларса янă. Темиçе кун иртсен Маршалек лейтенант

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсем чĕнсе калани

Хĕрӳ ĕçре фронтри геройсенчен кая юлар мар

Трактористкăсем! Пĕтĕм Союзĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва тухăр!

Хаклă хĕр-тантăшсем — Совет Союзĕнчи трактористкăсем!

Пирĕн юратнă тăван çĕршывăмăр йывăр кунсене тӳссе ирттерет. Гитлер йыттисем пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тапăнчĕç. Вĕсем пире пăхăнтарасшăн, пирĕн пуянлăха çаратасшăн, пирĕн уйсене, пирĕн çуртсене туртса илесшĕн, хамăра пире, ирĕклĕ çынсене, хăйсен чурисем туса хурасшăн.

Çутă, пуян, ирĕклĕ пурнăç — колхозлă пурнăç тăвас тесе, эпир сахал мар вăй хутăмăр. Гитлер вăрă-хурахĕсем халĕ çав пурнăçа аркатса тăкма пăхаççĕ. Вăхăтлăха туртса илнĕ совет районĕсенче вĕсем тĕнче халиччен курман тискер ĕçсем тăваççĕ: хĕрарăмсене, ачасене, стариксене вĕлереççĕ, пирĕн колхозсене çаратаççĕ, эпир тăрăшса тунă пурлăхсене нимĕç баронĕсемпе помещикĕсене параççĕ, колхозниксене вĕсен чурисем тума пăхаççĕ. Анчах та çакă вăл пулма пултараймасть!

Нимĕçсен пыйтланнă çарне Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле хăвалать. Хĕрлĕ Çар мĕнпур совет çĕрне тăшманран тасатас куна кĕтсе илме вăрах юлмарĕ ĕнтĕ.

Хаклă тантăшсем! Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе пĕрле гитлеровецсене хирĕç Терек, Кубань, Ставропольщина тăрăхĕнчи пирĕн тăван казаксем те çапăçнăшăн эпир çавтери савăнатпăр. Ылханлă фрицсем совет казакĕн алли мĕнтери хăватлине хăйсемех курчĕç. Хĕрлĕ утлă çарăн хĕçĕсем нимĕçсен пуçĕсене сахал мар турарĕç. Ахальтен каламаççĕ пулĕ — совет казакĕсене курсан, нимĕçсем каскăн кушак пек чĕтĕрене ерессĕ тесе.

Ĕнтĕ çуркунне çывхарать. Пирĕн чылайĕшĕсен ашшĕсем, упăшкисем, пиччĕшĕсем фронтра. Уйхир ĕçĕн чи пысăк пайĕ пирĕн çине, хĕрарăмсем çине ӳкет. Пирĕн боецсем мĕнле апатланасси çуркуннене мĕнле ирттернинчен килет. Тутă хырăмпа çапăçма та хаваслăрах. Çапла вара, пирĕн çуракинчи ĕçĕмĕр — иккĕмĕш фронт пулса тухать. Çĕршыв тата Хĕрлĕ Çар валли çăкăр, аш-какай, купăста-хăяр, промышленность валли — чĕртавар çителĕклĕ тăратасси чылай енĕпе пиртен, хĕрарăм трактористкăсенчен килет. Фронта продуктсем çитменнипе килĕшме пултаратпăр-и-ха эпир? Тем тусан та çук! Пирĕн таса тивĕçлĕх — вăл хамăр ĕçре пикенсе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлесси, эпир хамăрăн хĕрӳ ĕçре фронтри геройсенчен кая юлмалла мар. Нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкас тесе совет казакĕсем, мĕнпур хĕрарăм-трактористкăсем ик хут, виç хут ытларах ĕçлеме, нимĕн пăхса тăмасăр ир пуçласа сĕм каçчен ĕçлеме хатĕррине фашистла вăрă-хурахсем курччăр!

Хаклă тантăшсем-трактористкăсем! Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланас умĕн эпир, Ставрополь, Терек, Кубань тăрăхĕнчи трактористкăсем, пĕр-пĕринпе канашларăмăр та сирĕн пата çак боевой чĕнĕве çырас терĕмĕр. Пирĕн крайри трактористкăсем пĕлтĕр маттур ĕçлерĕç. Орденоносец Сорокина бригади Новолуцк районĕнчи Григорьевски МТС-ри трактор бригадисенчен чылайĕшĕнчен мала тухрĕ. Сорокина юлташăн кашни тракторĕ, çемçе çĕре сухаласи çине куçарса шутласан, сезонра 620 гектар сухаланă. Хĕрсем 1620 килограмм горючи перекетлерĕç. Хăйĕн машинисене бригада пĕтĕмĕшпех юсаса çитерчĕ. Маланья Хоромцова 1941 çулта СТЗ тракторпа хăйĕн сменинче 564 гектар сухаларĕ, Клавдия Хвастунова «Универсал» тракторпа — 430 гектар сухаларĕ. Джамбульски МТС-ра Бондаренко бригади чăн-чăн фронтри пек тăрăшса ĕçлерĕ. Ун бригадинчи 4 трактористка пĕлтĕр 2714 гектар сухаларĕ.

Çавнашкал бригадăсем пирĕн сахал мар. Халĕ ĕнтĕ вĕсен хисепĕ татах та ытларах пулмалла. Эпир, трактористкăсем, пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлĕпĕр, пирĕн стахановла ĕçпе пĕтĕм çĕршыв мухтанма пултартăр.

Трактористка ĕçне вĕренсе çитнĕ хĕрарăмсемпе хĕрсен хисепĕ вăрçăччченхи вăхăтра пирĕн крайра 3000 трактористкăна яхăн çитнĕччĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа совет патриоткисенчен татах 2000 çын ытла трактор рульне тытрĕç. Чылайĕшĕсем вĕсенчен хăйсем пархатарлă ĕçлеме пултарнине кăтартрĕç. Тĕслĕхрен ак Вера Чиркашинăна, Ворошиловск районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» колхозри колхозницăнах илер. Упăшкипе пиччĕшĕ Хĕрлĕ Çара тухса кайсан, вăл трактористкăсен кĕске срокла курсне вĕренме кĕрет. Курсран вĕренсе тухать те хăйшĕн çĕнĕ ĕçе хăюллăн пикенет. Чиркашина юлташ СТЗ тракторпа хăйĕн сменинче сентябрь уйăхĕнчен пуçласа ноябрь уйăхĕн вĕçне çитиччен, çемçе çĕре сухалани çине куçарса шутласан, 200 гектар сухаланă. Çав хушăра кăна вăл 120 килограмм горючи перекетленĕ. «Коммунистический маяк» колхоз (Орловски МТС) членĕ Матрена Спивакова пиччĕшне Хĕрлĕ Çара ăсатса хăй ун тракторĕ çине ларать. Август уйăхĕнчен пуçласа ноябрь уйăхĕ пĕтиччен вăл СТЗ тракторпа 216 гектар сухалать, 150 килограмм горючи перекетлет.

Хĕрарăм колхозра пысăк вăй пулса тăнине ĕнтĕ фактсемпе çирĕплетнĕ. Кăçал, 1942 çул, эпир—Ставрополь, Терек, Кубань таврашĕнчи трактористкăсем, ĕçри паттăрлăх тĕслĕхĕсене татах та ытларах ӳстерĕпĕр.

Хĕллехи уйăхсенче эпир вĕренетпĕр, уйхир ĕçне ирттерме тĕплĕн хатĕрленетпĕр. Тракторпа ĕçлес искусствăна пирĕн татах 4000 хĕр вĕренет. Çуркуннерен пуçласа Орджоникидзе крайĕн уйхирĕнче 10.000 ытла трактористка ĕçлемелле. Пирĕн трактористкăсен çарĕ пĕр ĕмĕтпе çунать: ялхуçалăхĕн çĕнĕ çулĕнче совет патриоткисем-трактористкăсем умĕнче тăракан ответлă задачăсене мухтавлăн пурнăçлассишĕн кĕрешет.

Эпир, Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсем, хамăр умра тăракан задачăсемпе тĕплĕн паллашса, 1942 çулта çаксене тума обязательствăсем илетпĕр:

Кашни условнăй илнĕ 15 вăйлă трактор пуçне, çемçе çĕр çинче сухалани çине куçарса шутласан, 700 гектартан кая мар сухалама; акассине, тырпул пухассине, кĕрхи çĕртме тăвассине май килнĕ таран кĕске срокченче тата агротехникăн пур правилисене те пăхăнса туса ирттерме; уйрăмăнах çуркунне васкама, — çуркуннехи пĕр кун çулталăк хушши тăрантать,—сĕрмелли материалсемпе горючине МТС-сен норминчен 5 процент кая мар перекетлеме; тракторсене юсама панă укçана 10 процентран кая мар перекетлеме; тракторсене юсама мĕн кирлĕ, çавсене пурне те хамăр патăртах шыраса тупма, государствăран сахалтарах ыйтма, государствăна хамăр ытларах пама; графика пур енчен те пăхăнса, машинăсене техника хушнă пек упрама, сезон вĕçленнĕ тĕле пур машинăсене те лайăх илсе çитерме; çапăçу хирĕнче боец хăйĕн хĕçпăшалне мĕнле тытать, эпир те хамăр машинăсене çавăн пек тытма пулатпăр.

Хаклă юлташсем, боевой тантăшсем! Эпир сире трактористкăсен тата трактористкăсен бригадисен пĕтĕм союзри социализмлă ăмăртăвне сарса яма чĕнетпĕр. Хăвăр çине конкретнăй обязательствăсем илĕр! Хамăрăн стахановла ĕçпе Гитлерăн вăрă-хурахла çарне пуçĕпех аркатса пĕтерсе тăкассине хăвăртлатар. 1942 çул пур культурăсем те халиччен пулман хăватлă тухăç панă çул, фронтшăн та, тылшăн та ялхуçалăх çимĕçĕсене ытлашшипех пухнă çул, гитлерла йытлĕтăвĕсене пуçĕпех аркатса пĕтерсе тăкнă çул пултăр.

Пĕтĕм вăя ылханлă тăшмана аркатса тăкнă çĕре! Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр çулпуç тата пирĕн çĕнтерӳсен организаторĕ — юратнă тăванăмăр Сталин юлташ!

Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсем хушшинче:

Ново-Егорлыкски, Ипатовски, Княгински, Дивински, Буйволински, Григорьевски тата Джамбульски МТС-чи хĕрарăмсен бригадисенчи трактористкăсем — Надежда Рожкова, Ольга Кэтюкова, Анна Кастрюлина, Мария Ступликова, Мария Азарова, Анна Божкова, Жилина, Меланья Хорелцева, Клавдия Хвастунова, Анна Тетербенова, Мария Ивашненко, Устинья Максимович, Анастасия Костюкова, Галина Костюкова, Надежда Белегурова, орденоносец Сорокина, Дарья Шалашина, Нина Лукьянова, Агафя Орехова, Александра Ефимова тата ыт. те.

ПĔТĔМĔШПЕХ ФРОНТ ВАЛЛИ!

Укерчĕк çинче: [illegible] Н-ски заводри сверловщица А. Я. Кирпичева гранатăсем хатĕрлет.

Н. КУЛЕШОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Колхозниксем фронтовиксене пулăшаççĕ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, мартăн 6-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Малти позицисем çывăхĕнчи Украинăри пысăк ял. Фронтпа ял хушшинче пĕтĕмпе те тăватă километр çеç. Кунта çапăçу шавĕсем, орудисем кĕмсĕртетни, автоматсемпе пулеметсем тăрлатни, минăсем çурăлса кайни илтĕнет. Кунтан пĕлĕте ӳкнĕ пушар çутти курăнать: нимĕçсем юнашар ялти çуртсене вут тивертсе çунтарса яраççĕ. Ялти çынсем кашни самантрах питĕ пысăк хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Анчах ун пек пулин те, вĕсем хăйсен тăван ялĕнчех юлнă, Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пыраççĕ.

Пирĕн подразделенисенчен пĕрин командирĕ, старши лейтенант Покупников Фрунзе ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозницăсен ырă ĕçĕ çинчен пăлханса каласа парать. Çак артельри колхозницăсем малти позицисенех боецсем валли апат-çимĕç илсе пынă. Ĕç çапла пулса иртнĕ. Пирĕн подразделение противник флангсенчен хупăрласа илсе, пирĕн боевой йĕркесем ăшне саваллаcа кĕнĕ. Пирĕн подразделени чылай вăйлăрах противника хирĕç виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă. Противник пирĕн подразделение хăйĕн тылĕнчен татса уйăрнă. Тăваттăмĕш кунне боецсем Мария Куприянова, Мария Русанова, Шацкая т. ыт. колхозницăсене те курнă. Вĕсем пульăсем айĕнче, снарядсем çурăла-çурăла кайнă вырăнсем урлă, хăйсем çеç пĕлекен сукмаксем тăрăх пырса, чи малти позицисенчи паттăр боецсем валли хăйма, сĕт, çăмарта, çăкăр, вĕри кукăль тата ытти пĕрлĕ апат-çимĕçсем те илсе пынă. Колхозницăсен ырă ĕçĕ боецсене хаваслантарса пăлхантарнă, вĕсене çĕнĕ вăй-хăват парса хавхалантарнă—çак ĕçре вĕсем Хĕрлĕ Çара пирĕн пĕтĕм халăх юратнине курнă. Çав кунах пирĕн боецсем нимĕçсене халăх пурăнакан пунктран çапса кăларнă, нимĕçсен мотоциклисчĕсене 300 çынна çити, 10 танкне ытла пĕтерсе тăкнă.

Мухтавлă боецсем çинчен ашшĕсем пек тăрăшнине пĕр вăхăтрах, колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн боевой помощникĕсем те пулса тăраççĕ. Вĕсем фронт линийĕ урлă каçса Командовани валли паха сведенисем илсе килеççĕ. Н-ски çарта 15 çулти Миша Корчака пурте пĕлеççĕ. Ăна пирĕн правительство пысăк наградa—«За отвагу» медаль панă. Фронт унăн тăван ялне пырса кĕрсен, фашистсем унăн куçĕ умĕнчех унăн кил-çуртне вут тивертсе çунтарса янă. Вара советăн çамрăк патриочĕ часть комиссарĕ патне пынă та мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăрса ылханлă гитлеровецсене хирĕç çапăçма кăмăл тунă. Миша Корчака тыла ăсатма тăнă, анчах вăл хăйĕн шухăшне пăрахман. Вăл разведчик, питĕ ăста разведчик пулса тăнă. Пĕрре Миша нимĕçсем йышăнса илнĕ яла пырса кĕрсе противник мĕнле вырнаçни, унăн чĕрĕ вăйĕпе техники çинчен питĕ паха сведенисем илсе килнĕ. Вăл илсе килнĕ сведенисем пирĕн артиллеристсене, пехотинецсемпе пĕрле, тăшманăн 8 танкне пĕтерсе тăкма, нимĕçсен пехотине батальон ытла сапаласа яма тата яла хăюллăн та хăвăрт йышăнса илме пулăшнă.

Г. КОГЕЛЬМАН.

Час ак кăмрăк тухĕ

Фронт çывăхĕнчи кăмрăк трест управляющин, Никита Алексеевич Изотовăн кабинетĕнче чугун кăмака хутаççĕ. Хĕрӳ. Изотов сĕтел хушшинче ларать, çырать, анчах та ăна тăтăшах пыра-пыра чăрмантараççĕ. Алăка шаккани илтĕнет. Сталинск облаçĕнчи шахтерсем, Миллеровăран, Снежнянкăран килнĕ çынсем пĕлĕме кĕрсех тăраççĕ. Ĕç ыйтаççĕ. Вĕсем шахтăсем ĕçлеме тытăннине илтнĕ те Донец çĕрĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчен çакăнта тапла туртăннă. Фронтовик-шахтер арăмĕсем Изотов патне канашлама, пулăшу ыйтма пыраççĕ. Трестра ĕçлекенсем кăмрăк мĕнле тиени çинчен, ремонт ĕçĕ мĕнле пыни çинчен сводкăсем илсе пыраççĕ. Чӳречерен шахта ĕмĕлкисем курăнаççĕ. Триконсем çийĕпе халлĕхе вагонсем чупаççĕ-ха, триконĕсем хăйсем те, сăрăрах юрпа витĕннĕскерсем, шăпах тăраççĕ. Çĕр айĕнчи кăмрăка никам та хускатмасть-ха. Анчах ир те, каç та шахтăра ĕнтĕ хĕрӳ ĕç пырать. Çынсем лара-тăра пĕлмесĕр ĕçлеççĕ: шыв тăкаççĕ, тулса ларнă уклонсене тасатаççĕ, чугунçула юсаççĕ. Изотов пире савăнăçлăн 1-мĕшпе 1-бис, 2-мĕшпе 2-бис шахтăсем ĕçе каяс кун çинчен, илемлĕ çĕнĕ стройка çинчен, унпа юнашар вырăнаçнă ултă шахта (пĕчĕккисем те, пысăккисем те) çĕнĕрен ĕçлеме тытăнассине ĕнтĕ нумаях кĕтмелле марри çинчен каласа парать.

Калама çук йывăр кунсене тӳссе ирттерме тивнĕ çак хулан. Виçĕ енчен ун патне тăшман çывхарнă, виçĕ енчен хăйĕн тискер савăлĕсемпе çапнă. Тăшман Платоновски хутор çине тапăннă, тăшман разведки хуларан 8 çухрăмра кăна пулнă, пушанса юлнă хула урамĕсем тĕлĕнче аялтанах фашистсен самолечĕсем ярăнса çӳренĕ. Каярахпа Совет Союз Геройĕсен Петраковскипе Провалован шахтерсенчен пухнă чаçĕсем фашистсен чи суйласа илнĕ дивизийĕсене каялла хăваласа янă. Тăшман текех урса тапăнмасть, вăл çĕр айне шала алтса кĕрсе хăйне хăй çеç сыхлать. Анчах вăл ытла инçете пытанман, çывăхрах. Хăй тавра блиндажсем тăвать, окопсем чавать, тĕрлĕ чăрмавсем хунă, минăсем лартнă уйсем вăррине йăлпăнать. Çĕрлесенче артиллерирен пени илтĕнет, нимĕç ракетисем хыпса çуннисем курăнаççĕ. Анчах та хĕçпăшалланнă шахтерсем хӳттинче хула çăмăллăн сывлама тытăнать, çĕнелет, вăл хăйне-хăй йывăр чиртен хăтăлнă организм пек туять. Пурнăç хăйĕн ахаль чухнехи, куллен кунхи çулĕ çине кĕрет. Урампа пысăк тăлăп тăхăнса янă хĕрарăм килти ăпăр-тапăра тиенĕ çуна туртса иртет. Пĕчĕк хĕрача çунине хыçалтан тĕртсе пырать, емăшне пулăшать.

— Ăçтан килетĕр? —Ворошиловградран, каялла, тăван хулана.

Кăнтăр кӳлĕмĕ. Шкултан кулкаласа, шавласа пĕчĕк ачасем чупса тухаççĕ. Тата тепĕр минутăран иккĕмĕш смена вĕренме тытăнмалла. 9-мĕш класра вĕренекенсемпе 10-мĕш класрисем шкула кĕре-кĕре каяççĕ. Темиçе уйăх каялла, хула патне фронт çывхарнă вăхăтра, шкул ĕçлеме чарăннă, шкул çурчĕ пуш-пушах ларнă, чӳречисем те унăн çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ пулнă. Ачасем шкул умĕнчен иртнĕ чухне пуçĕсене уснă. Халĕ, акă, каллех ачасем шкула пухăнаççĕ, кĕнеке тытса вĕренме лараççĕ. Вĕсем хăйсен шкулне хăйсемех çуса тасатнă, уçăлтарнă, тирпейленĕ.

«Знамя стахановца» ятлă вырăнти хаçат редакцийĕ черетлĕ номерĕн планне тăвать. Ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен слечĕ районри колхозниксене çуракине кăтартуллăн туса ирттерме чĕннĕ. Çав чĕнĕве колхозниксем мĕнле йышăннине кăтартакан материалсене хаçатра пичетлемелле, малта пыракан колхозсен опычĕ çинчен каласа памалла, кайра пыракан колхозсен çитменлĕхĕсене тăрă шыв çине кăлармалла.

Хулари суту-илӳ çинчен, çар кружокĕсен ĕçĕсем çинчен заметкăсем кĕртмелле—вырăн та сахал, хучĕ те çителĕклех мар. Анчах чи кирли, чи пахи, паллах ĕнтĕ, шахтăсем. Вăрçăчченхи вăхăтра çак районри кăмрăк тресчĕ Донбасри чи пысăк шахтăсенчен пĕри тесе шутланнă. Кунта чăн-чăн хура ылттăн шăларнă—талăкне темиçе пин тонна калама çук паха антрацит тупнă. Халĕ çынсем пĕр шухăшпа хыпса çунаççĕ, хăвăртрах çав шахтăсене çĕнĕрен ĕçе яма, çĕршыв валли каллех кăмрăк парасшăн хыпăнаççĕ. Родионов, Чеботарев, Вагора бригадисем—электриксем, монтажниксем, шыв тăкас ĕçĕн специалисчĕсем 1-мĕш, 1-бис, 2-мĕш 2-бис шахтăсенче стахановла ĕçлеççĕ. Подъемнăй машинăсем, триконник лебедкисем, вăйлă вентиляторсем, трансформатор киоскисем ĕçлеме тытăннă. Андриенко ертсе пыракан бригада шартлама сивве, вăйлă тăшмана пăхмасăр 40 километр тăршшĕ ытла чугунçул юсанă. Шахта патне ĕнтĕ пирвайхи поездсем пыраççĕ. Час, час ак çĕр айĕнчен кăмрăк та тулалла йăтăнса тухĕ. Анчах та халлĕхе юсав ĕçĕсем пĕтмен-ха, трест фронта хăйĕн кивĕ запасне ăсатать. Шахтăна ĕçе ярас тĕлĕшпе çĕр айĕнче ĕçлекенсем мĕнле лайăх ĕçлеççĕ, çĕр çийĕнче те грузчиксем çавăн пекех лайăх ĕçлеççĕ. Грузчиксем — Горячий, Иванов, Перфильев юлташсем куллен 20-шер, 22-шер тонна кăмрăк тиеççĕ. Нумай пулмасть кăна Попов юлташ 27 тонна тиенĕ. Бригадир Петухин юлташ хăйĕн нормине 200 процент тултарса пырать. Ĕнер, пĕтĕмпе илсен, 2949 тонна, паян—3000 тонна кăмрăк тиенĕ.

9 сехетре çынсем килĕсене саланаççĕ, лăпланнă тĕттĕм хула урамĕнче хуралçăсем кăна çӳреççĕ. Халĕ ĕнтĕ артиллерирен пени, инçетре пыракан çапăçу кĕрлевĕ уççăнах илтĕнет. Фронт инçетре мар, фронт юнашарах, вăл хăй çинчен яланах астутарать.

ГАЛАНОВ.
(«Правда» мартăн 2-мĕш).

Совет войскисен енне вĕçсе каçнă нимĕç летчикĕ каласа пани

Нимĕç çар летчикĕ лейтенант Герберт Баумгартнер, «Хейнкел-111» самолетăн командирĕ пулнăскер, 1942 çулти мартăн 4-мĕшĕнче Крымра, Ленински районра, пирĕн енне вĕçсе каçса хăй ирĕклĕнех совет войскисене парăннă.

Допросра Баумгартнер Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа хăйĕн хутшăнас килменни çинчен, çавăнпа та хăй ирĕкĕпех тыткăна килме шутлани çинчен каласа панă. Кунпа пĕрлех вăл çакăн пек заявлени çырса панă:

«Эпĕ, лейтенант Герберт Баумгартнер, 4-мĕш сывлăш флочĕн 4-мĕш корпусĕнчи «Хейнкель-111» самолетăн командирĕ, мартăн 4-мĕшĕнче Кировоград — Запорожье маршручĕ тăрăх вĕçсе тухрăм. Эпĕ хамăн начальникрен, обер-лейтенант Кляйнран, тренировкăллă вĕçӳ сăлтавĕпе Сарабуз урлă вĕçме ирĕк ыйтрăм. Çакăн пек маршрута эпĕ Хĕрлĕ Çар енне вĕçсе каçас тесе суйласа илтĕм.

Эпĕ Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа Гитлер хăй тапратса янине тата Совет Союзĕн Германи тĕлĕшпе нимĕнле усал шухăш та пулманнине ăнланса илтĕм. Çакăн çинчен нимĕç салтакĕсенчен нумайĕшĕ ăнланма пуçлаççĕ ĕнтĕ. Вырăс халăхне хирĕç туса пыракан тĕрĕслĕхсĕр тата вăрă-хурахла вăрçа хутшăнма эпĕ килĕшместĕп, çавăнпа та малтанхи май килнĕ вăхăтрах вырăссем енне вĕçсе каçма шухăшларăм, халĕ ĕнтĕ эпĕ çак ĕçе турăм.

Манăн хам вĕçсе килнĕ самолет пĕтĕмпех юсавлă. Çĕр çине анса ларнă чухне çеç винтăсем çĕмĕрĕлчĕç. Эпĕ уçă уя анса лартăм, çав вăхăтра сылтăм аллăма амантрăм. Çавăн пирки çак тĕрĕслĕхсĕр, ылханлă вăрçа хутшăнма пăрахни çинчен калакан заявление сулахай аллăмпа çыратăп.

Вăрçăччен эпĕ Инсбрукри Юбергаммерăн машинăсем тăвакан заводĕнче ĕçленĕ. Вăл заводри рабочисенчен çурри ытла фашистсене кураймасчĕç. Совет Союзне кăмăлласа калаçатчĕç.

Эпĕ халĕ вырăссем енне вĕçсе каçма килĕшни те çав заводра ĕçленĕ чух хамăн юлташсем панă шухăшран килсе тухрĕ, вĕсем рабочисемпе хресченсен влаçĕ тытса тăракан Совет Союзĕ çинчен юратса калаçатчĕç.

Манăн çакна та каламалла: кунта мана ăшă кăмăлпа йышăнса илчĕç. Хам халиччен шутланă пекех, гитлеровецсен вырăссем тыткăна илнĕ çынсене начар пăхни çинчен калакан юмахĕсем пĕтĕмпех суя иккенĕ курăнчĕ.

Эпĕ хамăн юлташсене: летчик лейтенантсене Кремса, Лессмайера, старши лейтенантсене Вагнера, Ломана, Кляйна тата ытти нимĕç летчикĕсене те Совет Союзне хирĕç Гитлер туса пыракан ирсĕр вăрçа пăрахма тата ман пекех вырăссем енне вĕçсе каçма чĕнетĕп.

Лейтенант Герберт
БАУМГАРТНЕР.
4-мĕш сывлăш флочĕн 4-мĕш корпусĕнчи 27-мĕш эскадрильйăри «Хейнкель-111» самолетăн командирĕ».

Фашистсен тискер ĕçĕсем

ВОЛОКОЛАМСК, мартăн 5-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕç оккупанчĕсен ирсĕр ĕçĕсем, вĕсен тискерлĕхĕн çĕнĕрен çĕнĕ фактĕсем куллен куç умне тухса пыраççĕ. Тахçан, ĕлĕк-авал пурăннă дикарьсем пек, тискер выльăхла этемсем пек, вĕсем, нимĕне уяса тăмасăр, историре паллă пулса тăракан çуртйĕрсенчен вите туса хураççĕ, музейсенчи паха пурлăхсене çаратса пĕтереççĕ, калани культурăллă çыншăн хаклă япаласене пурне те вараласа, юхăнтарса пĕтереççĕ.

1920 çулти ноябрĕн 14-мĕшĕнче Владимир Ильич Волоколамск районĕнчи Кашино ялне пырса кайнă пулнă. Унта вăл электричество станцине туса пĕтерсе ĕçе янă çĕре пынă. Ку станцие тăвас ĕçе Владимир Ильич хăй питĕ çывăххăн хутшăннă пулнă. Кашино ялĕнчи çавăн чухне Ленин кĕнĕ çурта —Кашинсен çуртне кайрантарах Теряеври историпе краеведени музейĕ хăй аллине илсе, ăна типтерлĕн сыхласа усранă. Кашинăна пĕтĕшпах ĕççыннисен экскурсийĕсем пырса çӳренĕ. Кашино ялĕнчи çынсем хăйсем Ленина кĕтсе илсе унпа курса калаçнă çурта экскурсантсене пит те кăмăллăн кăтартнă, ун çинчен кала-кала панă. Вĕсем 1920 çулта Ленин кунта пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен сăмах тухса каланă площаде, Ленин ячĕпе тăракан электростанцие, пĕвене тата Владимир Ильич парса янă парнесене: сложнăй молотилкăпа «Фордзон» трактора экскурсантсене кăтартнă.

Нимĕç оккупанчĕсем Волоколамск районне пырса кĕнĕ те унти историпе культура памятникĕсене пурне те тустарса, çаратса тухнă, ялти мирлĕ халăха тискеррĕн мăшкăлласа хĕнесе пĕтернĕ. Ĕлĕк Гончаровсен пулнă усадьбăри Пушкин пӳлĕмĕнчен вите туса хунă, Чернышевсен усадьбинчи питĕ лайăх санаторие çаратса аркатса тăкнă. Ярополецри ачасен çурчĕсемпе вылямалли вырăнĕсене çунтарса яма тăнă. Теряеври Волоколамско-Иосифовски монастырьте пулнă музее пĕтерсе тăкнă. Таврари питĕ лайăх ĕçлесе тăнă колхозсене, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулнăскерсене, сăмахран, преми илнĕ «Путятино» колхоза тата ыттисене те вут тĕртсе çунтарса тухнă.

Кашино ялĕ пĕр уйăх та çирĕм кун хушши нимĕç оккупанчĕсен аллинче пулнă. Кашинăран чакса тухса кайнă чухне нимĕçсем ялти 73 килтен 51-не пĕтĕм кил хушшинчи çуртйĕрĕ-мĕнĕпе çунтарса янă. Ленин ячĕпе тăракан электростанцие пĕтерсе тăкнă, ытти колхозсемшĕн лайăх тĕслĕх пулса тăракан выльăхсем хупмалли çĕнĕ витене çунтарса янă, клуба та вут тĕртме хăтланнă, анчах çунтарса яма ĕлкĕреймен. Кашино ялĕн Çĕнĕ Кашино ятлă пайне нимĕн юлмиччен çунтарса тухнă. Ĕлĕк электричество çутипе йăлтăртатса тăракан, çыннисем савăнăçлăн шăкăлтатса утакан урамсем вырăнне — çулăмпа кăмрăкланса хуралса ларнă йывăççемпе кăмакасем тата вĕсен мăрьисем кăна тăрса юлнă. Культурăллă илемлĕ яла акă мĕн туса хунă нимĕç эсрелĕсем. Старое Кашино ялĕнче нимĕçсем, хăйсен питĕ васкавлă чакса тухма тивнĕ пирки, пӳрт-çуртсене суйласа илсе кăна вут тĕрте-тĕрте хăварнă. Вĕсем Ленин пӳртне, колхоз председателĕн Родионовăн пӳртне çунтарса янă. Родионова юлташ оккупантсем пырса çитиччен колхоз выльăхĕсене тылалла хăваласа кайма, вĕсем нимĕçсен аллине лекесрен çăлса хăварма ĕлкĕрнĕ пулнă.

Кашинăна, тăлăх карчăка, нимĕçсем хăйсен офицерĕсем валли хурсем ăшаласа пама хушнă пулнă. Карчăк тем тусассăн та килĕшмен. Нимĕçсем ăна кĕнесе пĕтернĕ, пĕтĕм пурлăхне çаратнă, унăн пӳртне, 1920 çулта Ленин яла пырсассăн кĕнĕ çурта, çунтарса янă. Ват çынсемпе вĕтĕр-шакăрсем окопсемпе çĕр пӳртсенчен яла таврăннă çĕре Ленин пӳртĕнчен тата ытти нумай çуртсенчен нимĕн те тăрса юлман.

Çак тискерлĕхсене Кашино çыннисем нихçан та манас çук, нихçан та каçарас çук вĕсем гитлеровецсене.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИРИ АВИАДЕСАНТ. Укерчĕк çинче: парашютистсем самолетсем çинчен сиксе анни.
С. КНОРРИНГ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕНЕ ВИЛĔМ! Мускаври Н-ски завод вăрçăччен ширпотреб япалисем кăларатчĕ, халĕ танксене хирĕç пемелли гранатăсем тăвать. Укерчĕк çинче: танксене хирĕç пемелли гранатăсен корпусĕсене çыпăçтараççĕ.

Н. КУЛЕШОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунĕ

Мускавра пулнă чаплă лару

Мартăн 8-мĕшĕнче Чайковский ячĕпе тăракан концертнăй залра Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунне хисеплесе, Мускав хулинчи парти, совет тата обществăллă организацисен чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Лару уçăлас умĕн зала ĕç фронтĕнчи боецсем—вăрçă вăхăтĕнчи стахановкăсем, оборона сооруженийĕсен строителĕсем, хĕрарăмсем-врачсем, санитаркăсем, наука, культура тата искусство деятелĕсем, Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе политработникĕсем пухăннă.

Президиум сĕтелĕ умне Щербаков, Буденный, Землячка, Николаева, Попов, Мишакова, Черноусов, Виноградова тата ытти юлташсем тухаççĕ.

ВКП(б) Мускав хула комитечĕн секретарĕ Попов юлташ чаплă ларăва уçать. Ларăван хисеплĕ президиумне ЦК ВКП(б) Политбюроне суйланине ларăва пухăннисем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Сталин юлташăн ятне асăнсан пĕтĕм зал ура çине тăрать, Хĕрлĕ Çарăн тата совет халăхĕн аслă çулпуçне саламлакан сасăсем илтĕнеççĕ, тăвăллăн алă çупни хĕрлесе тăрать.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунĕ çинчен ВЦСПС секретарĕ Николаева юлташ доклад тăвать.

— Кăçалхи çул,—тесе калать Николаева юлташ,—Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне эпир нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă обстановкăра ирттеретпĕр. Паянхи кун мĕнпур совет халăхĕ тăшмана хирĕç çĕкленчĕ. Çавтери анлă фронтра, Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕс таран, пирĕн паттăр воинсем, Сталин юлташ ертсе пынипе, тăшмана çине-çинех пыра-пыра çапаççĕ, ăна Хĕвеланăçнелле хăвалаççĕ.

— Халăх ĕçĕшĕн кĕрешсе чаплă çул йĕре утса пухнă, мĕнпур халăхпа пĕрле социализмлă строй тунă хĕрарăм пур правăсемпе те усă курать, ăна юратаççĕ, кăмăллаççĕ; çак кунсенче совет хĕрарăмĕн пултарулăхĕ, кĕрешӳри çирĕплĕхĕпе таланчĕ çавтери вăйлăн палăрчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн хĕрарăмсем, тăван çĕршыва юратнипе хавхаланнăскерсем, хăйсен мĕнпур вăйне, хăйсен мĕнпур пултарулăхне фронта пулăшма, Хĕрлĕ Çара пулăшма параççĕ. Совет хĕрарăмĕ нимĕçĕн вараланчăк аттине пирĕн телейлĕ пурнăçа таптаса тăкма нихçан та ирĕк памĕ. Вăл тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерсе тăкиччĕнех кĕрешĕ!

Докладчик хĕрарăмсем предприятисенче тата колхозсенче хăйсене шеллемесĕр ĕçлени çинчен калать. Ĕлĕк арçын ĕçĕ шутланнă сложнăй професисене те хĕрарăмсем вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем металлургсем, горняксем, рабочисем пулса оборона предприятийĕсенче ĕçлеççĕ, тупăсем, самолетсем, минометсем туса кăлараççĕ. Пирĕн хĕрарăмсенчен вуншар пин врачсем, медицина сестрисем, санитари дружинницисем пулса ĕçлеме фронта кайнă.

Докладчик партизансемпе партизанкăсен геройла ĕçĕсене тĕплĕн сутатса парать. Зоя Космодемьянская тата Лиза Чайкина—акă тăван çĕршывшăн геройла кĕрешнин примерĕсем. Эпир çак хĕрсене нихçан та манмăпăр. Тăван çĕршывшăн тата ирĕклĕхшĕн хăйсен пурнăçне панă паттăрсене чыс та мухтав!

Малалла Николаева юлташ Мускав тавра оборона сооруженийĕсем тăвас ĕçре ĕçленĕ хĕрарăмсем-строительсем çинчен, ялта ĕçе татса паракан вăй пулса тăракан колхозница çинчен, унăн умĕнче çуракине ирттерес тĕлĕшпе пысăк ĕç тăни çинчен каласа парать.

— Мартăн 8-мĕш кунĕнче эпир совет хĕрарăмĕсене производствăра вăй-хала татах та ытларах ӳстерсе ĕçлеме чĕнетпĕр. Эпир чугунçул çинче ĕçлекен хĕрарăмсене поездсене фронт патнелле хăвăртрах çитерсе пыма, колхозниксене çуракине лайăхрах ирттерме чĕнетпĕр. Пирĕн çĕршыври пур хĕрарăмсен те çар специальноçĕсене вĕренме тытăнас пулать. Хĕрлĕ Çаршăн татах та ытларах тăрăшма, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене тĕппипех çĕнтериччен татах та активлăнрах, татах та хастарлăнрах кĕрешме чĕнетпĕр.

Чаплă лару пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташ патне салам яма йышăнать. Юлашкинчен пысăк концерт пулнă, унта столицăри чи лайăх артистсем хутшăннă. (ТАСС).

Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ Англи тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕрарăмĕсене саламлани

Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ — мартăн 8-мĕш ячĕпе çак вырăнсене саламсем янă: Англие— хĕрарăмсен Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх комитетне, кооператив Лигине, хĕрарăмсен либераллă федерацине; Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене — хĕрарăмсен Рузвельт ячĕпе тăракан ассоциацине, хĕрарăм клубĕсен пĕтĕмĕшлĕ федерацине, çамрăк хĕрарăмсен христиански ассоциацине, хĕрарăмсен национальнăй профессиллĕ Союзĕн Лигине, католик-хĕрарăмсен национальнăй советне тата ыттисене те.

Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн председателĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Валентина Гризодубова тред-юнионсен генеральнăй советне саламласа çапла çырать:

«Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕнче — мартăн 8-мĕшĕнче Англи хĕрарăмĕсене пĕтĕм чĕререн боевой салам ярать.

Эпир, Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем, гитлеризма аркатса тăкассине васкатма кирлине пурне те тăватпăр. Эсир те, хăвăр енчен, пирĕн хамăрăн пĕрлехи çĕнтерĕвĕн сехетне çывхартас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлессе эпир шансах тăратпăр. Хамăр хушăмăрти туслăх çыхăнăвне татах та ытларах çирĕплетĕр, гитлеризма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хамăр вăй-халăмăрсене пĕрлештерер».

* * *

Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитетне Англири, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи тата ытти çĕршывсенчи хĕрарăмсенчен куллен вуншар çырусем тата саламсем килсе тăраççĕ. Вĕсенче совет халăхĕ çине, совет хĕрарăмĕсем çине, Хĕрлĕ Çар çине ăшă кăмăлпа пăхни, гитлеризма хирĕç пыракан пирĕн геройла кĕрешӳшĕн калама çук савăнни палăрать.

Лондонра пурăнакан хĕрарăмсенчен Мускав хĕрарăмĕсем патне 32.398 çын алă пуса янă альбом-саламсем килнĕ, Ленинградăн паттăр хĕрарăмĕсен ячĕпе Бермингампа Бергенхед хĕрарăмĕсенчен, Сталинград хĕрарăмĕсен ячĕпе Конвентрирен, мĕнпур совет хĕрарăмĕсен ячĕпе Манчестертан çырнă çырусем килнĕ. (ТАСС).

ХĔРАРĂМСЕН ПАРОВОЗ БРИГАДИСЕМ

Мартăн 8-мĕш ячĕпе Омск чугунçулĕ çинче паровозсем çинчи хĕрарăмсен 3 бригади вахтăна тăнă. Вĕсем Мускава каякан йывăр тиенĕ поезда илсе тухнă.

ТĂВАНЛА ПАРНЕСЕМ

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ — мартăн 8-мĕш ячĕпе Челябинск хулинчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар гитлерла бандитсенчен ирĕке кăларнă Мускав патĕнчи районсенчи хĕрарăмсемпе ачасем валли кĕпе-йĕм, тумтир, атă-пушмак тата çимелли продуктсем пухса 38 вагон янă. (ТАСС).

Вырăнти советсен ĕçне çӳллĕ пусăма

Хальхи вăхăтра ялсоветсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Ялсовечĕ — совет влаçĕн вырăнти органĕ, большевиксен партийĕн, совет правительствин директивисене халăх хушшинче сарса пурнăçласа пыраканĕ. Халĕ, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пынă вăхăтра, вырăнти советсен ĕçри ответлăхĕ, организаторла вырăнĕ татах та ытларах ӳсрĕ. Ялсовечĕсен хăйсен территорийĕнчи колхозсен пĕтĕм ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркелемелле, мĕнпур ĕççыннисен массине вăйлă тырпулшăн, йышлă та пысăк продукци паракан выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешӳве мобилизацилемелле, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра татса памалла. Фронта, çĕршыва тырă, апш-какай, сĕт-çу, чĕртавар ытларах та ытларах парса тăрассишĕн ялсовечĕсен çине тăрса ĕçлемелле, ку ĕçе ялăнлăх комиссисене, ялсенчи мĕнпур актива явăçтармалла.

Çĕрпӳ районĕнчи ялсовечĕсенчен хăшĕ-пĕрисем çакна тивĕçлипе туса пымаççĕ-ха, хăйсен ĕçне ку тарана çитсе те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмен.

Лĕпсер ялсовечĕн ялăнлăх комиссисем пурĕ 5. Вĕсем, вăрçăччен вăхăтра хăйсен ларăвĕсенче чылай кирлĕ ыйтусене сӳтсе-явса, ялсоветне ĕçре сахал мар пулăшнă. Хальхи вăхăтра хăшпĕр комиссисен активĕ саланса пĕтнĕ. Ялсовет исполкомĕ вĕсене ĕçре пулăшмасть, хăйĕн ĕçне комиссисемпе çыхăнса туса пымасть. Çавна пула ялсовечĕ хуçалăхпа политикăллă кампанисене ирттерес тĕлĕшпе кая юлса пырать.

Лĕпсер ялсоветĕнче пурĕ 4 колхоз. Вĕсен умĕнче халĕ çуракине хатĕрленес ыйту çивĕччĕн тăрать. Анчах «Новая сила», «Коснария» колхозсем паянхи куна çитсе те аван çапса пĕтермен, çавăн пирки вăрлăхсем уйăрса хуман. «Новая сила» колхозăн пăрçа йышши культурăсем вăрлăхлăх уйăрма çитмеççĕ. Çитмен вăрлăхсене урăх колхозсенчен тырăпа улăштарма, е укçалла илме пулать. Анчах та колхозсене çакăн çинчен ялсовет исполкомĕ те, ялсовет çумĕнчи ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен ялăнлăх комисси те асăрхаттарман.

Шуртавăш ялсовечĕ те хуçалăхпа политикăллă кампанисене ирттерес ĕçре кая юлса пырать. Ялсоветне кĕрекен колхозсем паянхи куна çитсе те çуртырри вăрлăхĕсене уйăрса çитермен, государство умĕнчи обязательствăсене татман, укçа-тенкĕ пухас енĕпе те кая юлнă. Самообложени укçине пĕтĕмпе те 60 тенкĕ çеç пухнă. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Г. Никитин юлташ ĕçе йĕркелессишĕн тăрăшмасть.

Тивĕш ялсоветне кĕрекен «Актай» колхоз правленийĕ учетпа отчет ĕçне япăхтарнă. Колхозниксен ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине 10 уйăх хушши çырса пыман. Ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илсе пыман пирки, колхозниксене аванс шучĕпе тĕштырă едок тăрăх валеçсе панă. Çапла вара ялхуçалăх артелĕн уставне пăснă. Ф. Димитриев колхознике «çиекенĕсем сахал» тесе 7 пăт тырă панă, ĕçрен пăрăнса çӳрекен колхозника П. Петрова 30 пăт таран илнĕ. «Актай» колхоз государствăна 1941 çулшăн та тырпул парса татман. Çав вăхăтрах аванс шучĕпе колхозниксене тырпул тупăшĕн 60 процентне ытла валеçсе панă. Колхозри çитменлĕхсем çинчен Тивĕш ялсовет исполкомĕ аван пĕлет. Анчах çав çитменлĕхсене пĕтерес пирки ялсовет исполкомĕн председателĕ Малышев нимĕн те тумасть.

Çĕньял ялсоветне кĕрекен колхозсем («Сталино», Чапаев ячĕпе тăракан тата «Звезда» колхозсем) государствăна 1941 çулшăн тĕштырă, апш-какай парса татман. Кунпа пĕрлех çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те кая юлса пыраççĕ. Ялсовет исполкомĕ активпа çыхăнса ĕçлемест, йышăннă решенисене вăхăтра пурнăçласа пымасть.

Ялсовечĕсен хальхи вăхăтра ĕç нумай ĕнтĕ. Вĕсен, хуçалăхпа политикăллă кампанисене вăхăтра пурнăçласа пынипе пĕрлех, хăйсен территорийĕнчи кулленхи ĕçсене яланах пĕлсе тămалла. Анчах та, калас пулать, ялсовет исполкомĕсен председателĕсем чылайĕшĕсем ялсовет территорийĕнчи пурнăçпа сахал интересленеççĕ. Сăмахран, Чурачăк ялсовет исполкомĕн председателĕ Филиппова юлташ ялсовет территорийĕнче миçе мунча пуррине, миçе хуçалăх ĕне усранине пĕлмест.

Районри хăшпĕр учрежденисем чылай чухне паха мероприятисене ялсоветсене систермесĕрех, вĕсемпе çыхăнмасăрах ирттерме пăхаççĕ. Тĕслĕхрен, районри çĕрĕç пайĕ çамрăк выльăхсене контрактацилемелли йĕркесем çинчен колхоз председателĕсем патне ятарласа çыру çырса янă. Çакăн çинчен райçĕрĕç пайĕ ялсоветсене нимĕн те пĕлтермен. Юлашкинчен райçĕрĕç пайĕ çак ĕçе пурнăçлани çинчен ялсовет председателĕсенчен ыйтать. Курманилтмен япала çинчен, паллах, ялсовет председателĕсем нимĕнле ответ та пама пултараймаççĕ. Районри учрежденисемпе организацисен ялсовечĕсене манса хăварма кирлĕ мар. Колхозсене отношенисем, çырусем ярас пулсан, ялсовечĕсем урлă ярса памалла.

Ялсовечĕсене ĕçре район совечĕн пулăшса пымалла, вĕсене пулăшас майпа уйрăм ялсовет председателĕсен отчечĕсене итлемелле, хăйĕн ларăвĕсене чĕнмелле. Анчах та ларусене чĕнни ялсоветсене сахал усă парать. Мĕншĕн тесен райсовет исполкомĕ ларусене хатĕрленмесĕр ирттерет, вĕсенче пĕр кун хушшинчех нумай ыйтусем сӳтсе явать, çитменнине унта лайăх ĕçлекен ялсовечĕсен паха опычĕсене каласа памаççĕ.

Февралĕн 24-мĕшĕнче, çапла, райсовет исполкомĕн ларăвĕ пулса иртрĕ. Лару кăнтăрла иртсен икĕ сехетре пуçланчĕ. Каçхине 9 сехетчен пычĕ. Çав вăхăт хушшинче унта 16 ыйту сӳтсе яврĕç. Ларăва пыма тивĕçлĕ çынсене малтан пĕлтермен. Çавна пула хăшпĕр çынсене лару пынă вăхăтра телефон тăрăх чĕне-чĕне илчĕç. Лару каçа юлнă пирки инçетри ялсенчен килнĕ çынсем киле кайма васкаса ларчĕç. Вĕсем васканине кура лару сехечĕ-сехечĕпе пĕр чарăнусăр пычĕ.

Исполком хăйĕн ларăвĕсенче йышăннă решенисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслемест. Çавна пула пĕр ыйтăвах темиçешер хут сӳтсе явса решенисем йышăнаççĕ. Çапла район совет исполкомĕнчи работниксем, вăл шутрах унăн руководителĕ те, вăхăта ытларах ларусенче ирттереççĕ, вырăнти советсем умĕнче тăракан задачăсене, пурнăçа кĕртессишĕн çителĕклĕн кĕрешмеççĕ.

Отечественнăй вăрçă ялсовет ĕçне нумай хут çивĕчрех те оперативлăрах тума ыйтать. [illegible]

Г. ПЕТРОВ.

Республикăри комсомолецсем машина пайĕсене пухас ĕçре

Уйăха яхăн ĕнтĕ республикăри комсомолецсемпе çамрăксем ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Вĕсем тĕрлĕ машинăсен пайĕсене 16 000 штукăна яхăн пухнă.

ВЛКСМ райкомĕсем ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухассине тивĕçлĕ хак панă районсенче ĕç аван пырать. Сăмахран, Комсомольски районри комсомолецсемпе çамрăксем машинăсене юсама кирлĕ пайсене 13.000 тенкĕлĕх, Шупашкар районĕнче 9.691 тенкĕлĕх пухса панă. Шăхасан районĕнче тĕрлĕрен машина пайĕсене 8.700 тенкĕлĕх пухнă. Комсомолăн МТС çумĕнчи организацийĕнчи комсомолецсем (организаци секретарĕ Северова юлташ) 200 трактор пайĕ 4.200 тенкĕлĕх пухнă. Красноармейски районри комсомолецсемпе çамрăксем те машина пайĕсене 2016 тенкĕлĕх пухса панă. Чкаловски районри çамрăксем 20 коленчатăй вал, 188 шестерня, 15 подшипник, передачăн 6 коробкине тата ытти паха пайсене тупнă. Халĕ вĕсемпе ĕçре усă кураççĕ.

Калинински районра МТС çук. Апла пулин те, унта машинăсен пайĕсене пухас ĕçе аван йĕркеленĕ. Районĕпе пурĕ машинăсен пайĕсем 1477 штука пухăннă. Вăл шутра плугăн 263 тимĕрĕ, 95 плуг уççи, 123 шестерня тата ытти вак-тĕвек пайсем. Унсăр пуçне районри çамрăксем 2788 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă. Машина пайĕсене пухас тĕлĕшпе «Красноармеец» колхозри комсомолецсен хастарлă ĕçне палăртмалла. Вĕсем ытти организацисене пример кăтартрĕç.

Машина пайĕсемпе инструментсем, металсем пухас тĕлĕшпе республикăри колхозсенче ятарласа организациленĕ комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем ĕçлеççĕ. Вĕсем витесене, лаççене, сарайсене, мастерскойсене пыраççĕ, уйрăм колхозниксем патне çӳреççĕ. Çапла майпа темиçе çул хушши усă курмасăр выртнă машина пайĕсене тупаççĕ.

Анчах çак питех те паха ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек организациленĕ теме çук-ха. Машина пайĕсене пухас ĕçе Кувакино, Шăмăршă районĕсенче комсомолецсемпе çамрăксене питĕ сахал явăçтарнă. ВЛКСМ райкомĕ çумĕнче организациленĕ комисси çав ĕçе начар ертсе пырать. Шăмăршă районĕнче ку ĕçе хăшпĕр учрежденисемпе колхозсенче кăна тытăннă. Чылай çĕрте «пирĕн унта-кунта усă курмасăр выртакан машина пайĕсем çук», тесе лараççĕ. Çавăнпа хăшпĕр çĕрте çамрăксен комиссине те организацилемен, пухăннă пайсене юсас ĕçе пачах та тытăнман. Кувакино районĕнче çамрăксем миçе машина пайĕ пухнине ку таранччен те шутласа кăлараймаççĕ. Ку районсенче машина пайĕсене пухас ĕçпе çĕрĕç пайĕсем те сахал интересленеççĕ, çĕнĕ пайсем илсе килессине кĕтеççĕ пулас. Вырăнти ресурссемпе усă курни кăçал, вăрçă вăхăтĕнче, пит пысăк пулăшу пулнине ăнланасшăн мар.

Комсомол организацийĕсен, çĕрĕç оргăнĕсемпе пĕрле, трактор тата ытти ялхуçалăх машинисене юсама кирлĕ пайсене пухса, вĕсене тӳрлетсе ĕçре усă курассине вăйлатмалла.

А. КУЗНЕЦОВА.
ВЛКСМ обкомĕн хресчен çамрăкĕсен отделĕн заведующийĕ.

ПОЛИТИКĂЛЛĂ-МАССĂЛЛĂ ĔÇЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕМЕН

КАЛИНИНО. Комсомолăн Тури Карачурари «По пути Ленина» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ начар ĕçлет. Комсомолецсемпе колхозри çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе пачах организацилемен. Çавна пула ĕнтĕ колхозри çамрăксем обществăллă мероприятисенчен аякра тăраççĕ. Комсомол организацин пухăвĕсем вăхăтра пулмаççĕ. Комсомолецсем хушшинче дисциплина начар. Хăшпĕр комсомолецсем 4—5 уйăх хушши член укçи тӳлемен.

Комсомол организацин секретарĕ Г. Федорова юлташ комсомолецсен йышне ӳстерессипе пачах та ĕçлемест. Колхозра тăрăшса ĕçлекен çамрăксем сахал мар. Л. Власов, Л. Гладков, П. Ефремов çамрăксем колхозри пур ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсене комсомол ретне илсен аван пулмалла. Вăрçă кунĕсенче комсомол организаци кун пек ĕçлени килĕшмест.

Б. ШОРНИКОВ.

Ĕç тулашĕнче

ШĂХАСАН. Комсомолăн Уй-пуç Шĕнерти «Новый путь» колхозри организацийĕнче 10 комсомолец. Ялта вĕсем пысăк вăй пулмалла пек. Анчах ку организацири комсомолецсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Организацин секретарĕ М. Макаров юлташ ĕçе çителĕклĕ ертсе пымасть. Халĕ акă колхоз çуракине хатĕрленет. Комсомолецсем колхоза пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ-ха. Организаци ĕçне вăраха тăсмасăрах лайăхлатмалла. Комсомолецсен колхоз производствипе таччăнрах çыхăнса тămалла.

А. МАКСИМОВ.

Нимĕçсен пусмăрĕ айĕнчен тухнисене пулăшни

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри хăшпĕр шкулсенчи учительсемпе вĕренекенсем фашистла оккупантсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи шкул ачисене учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем пухса парса пулăшаççĕ. Кивĕ Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкулăн коллективĕ 250 тенкĕлĕх учебник, 300 карандаш, 100 перо, чернил таблеткисем тата ытти япаласем те пухса ярса панă. Çĕнĕ Кипеçри вăтам шкулта та ку ĕçе аван организациленĕ. Вĕренекен ачасем А. Добросмыслов 8 кĕнеке тата 20 тенкĕ укçа, Н. Слесаревпа В. Кузнецов 10-шар кĕнеке, К. Скворцова 5 кĕнеке, Ильина 3 кĕнеке панă.

В. ВИКТОРОВ.

Ирĕке кăларнă районсенчи шкулсенче вĕренекенсене пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК. Районри шкулсенче вĕренекенсемпе учительсем фашистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи шкулсенче вĕренекенсем валли учебниксем, тетрадьсем, карандашсем, перосем тата учебниксем илме укçа пухса яраççĕ.

Энтебери туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем ирĕке кăларнă районсенчи шкулсенче вĕренекенсене учебнăй пособисем илме 250 тенкĕ пухса панă. Кунти учительсем 400 тенкĕ пухнă. Кунсăр пуçне вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем 2500 тенкĕ укçа панă. 4-мĕш класра вĕренекенсем 70 тенкĕлĕх учебниксем пухнă. Шкул директорĕ А. Кудряшов 85 тенкĕлĕх учебниксемпе илемлĕ литература илсе панă.

Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта вĕренекенсем те учебниксем, тетрадьсем, карандашсем пухса параççĕ. Уйрăмăнах 10 «Б» класра вĕренекенсем ку ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем пĕр кун хушшинче учебниксем илме 80 тенкĕ пухнă. Уйрăм вĕренекенсем учебниксем, тетрадьсем, карандашсем илсе яраççĕ. П. Докторов хăй пĕччен 15 тенкĕлĕх учебниксем, тетрадьсем, карандашсем, перосем илнĕ. Кунти учительсем «Народный учитель» ятлă танксен колоннине тума кашни 35—40-шар тенкĕ укçа хывнă.

Тăрмăшри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем ирĕке кăларнă районсенчи шкулсенче вĕренекенсене учебниксем илме 125 тенкĕ пухса панă.

Ытти шкулсенче те вĕренекенсемпе учительсем ирĕке кăларнă районсенчи шкулсенче вĕренекенсене пулăшма учебнăй пособисем илме укçа пухаççĕ, учебниксем, тетрадьсем, карандашсем, перосем т. ыт. те илсе яраççĕ.

И. ПЕТРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ). Старая Русса районĕнчи Березицкое ялĕнчи колхозник Андрей Федорович Курочкин нимĕçсенчен 3 ещĕк патронсемпе гранатăсем пытарса усранă. Халĕ, пирĕн çарсем Березицкое ялне ҫапла тавăрнăсан, А. Ф. Курочкин хăй сыхласа усранă боеприпассене боецсене панă. **Ӳкерчĕк çинче:** лейтенант Михаил Михайлов А. Ф. Курочкина тав тăвать.

А. ГРИБОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пĕр шкулти вĕренӳ кунĕ

[illegible]

Г. ЛИВАШ.
И. РОНИ.

Государствăна тӳлемелли укçа-тенке срокченех пĕтĕмĕшпех тӳлесе татар

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи пур ĕççыннисем пекех Сталин юлташ пирĕн умма кăларса тăратнă задачăна — нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас задачăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ.

Урса кайнă фашистсен йыт кĕтĕвне хирĕç çапăçма пире калама çук нумай хĕçпăшал, боеприпассем, укçа-тенкĕ кирлĕ. Фронт валли мĕн чухлĕ ытларах тата хăвăртрах продовольстви парăпăр, кашни ĕççынни мĕн чухлĕ хăвăртрах государствăна обязательнăй йĕркепе тӳлемелли парăмсене парса татĕ—ĕççыннисен чи ылханлă тăшманĕ — гитлеризм та çавăн чухлĕ хăвăртрах арканĕ.

Колхозниксем, тӳрĕ кăмăллă единоличниксем — тăван çĕршывăн патриочĕсем производствăра калама çук тăрăшса ĕçлеççĕ, государствăна обязательнăй йĕркепе тӳлемелли хăйсен парăмĕсене вĕсем срокченех тата пĕтĕмĕшпех парса татаççĕ.

Калинински районри колхозниксемпе единоличниксем тӳлев извещенине иличченех, срокченех, вăрçă вăхăтĕнчи налога 150 пин тенкĕ ытла тӳлесе татнă. Çав районрах тата Кушар Юнтапари Каганович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем январĕн 7-мĕшĕнчех, вăрçă вăхăтĕнчи налог çинчен кăларнă законпа паллашнă пухурах, вăрçă вăхăтĕнчи налогăн хăйсене тивекен тӳпине пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă (колхоз председателĕ Ильин, налог пухакан агент—Быков).

Сĕнтĕрвăрри районĕнче, Астакасси ялсоветĕнчи «Пищевик» колхоз членĕсен хисепĕнчен 95 проценчĕ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле вăрçă вăхăтĕнчи налога çулталăкшăнах тӳлесе татнă, ытти укçа-тенкĕ парăмĕсене те пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă.

Çакнашкал тĕслĕхсем Чăваш республикинчи ытти районсенче те сахал мар.

Обязательнăй йĕркепе тата хăйсен ирĕкĕпе тăвакан страховани планне кăçалхи мартăн 1-мĕш тĕлне Чăваш республики тăрăх, пĕтĕмĕшпе илсен, 105,2 процент тултарнă. 3-мĕш пятилетка заемĕ (4-мĕш çулăн кăларăмĕ) енĕпе ялсенче квартал планне ĕнтĕ 93 процент тултарнă. Чылай ялсовечĕсенче колхозниксемпе единоличниксем самообложение срокчен тата пĕтĕмĕшпех парса татнă. Чăваш республикинчи вуншар, çĕршер колхозсем укçан илекен подоходнăй налога срокчен тата пĕтĕмĕшпех тӳлесе татаççĕ.

Укçа-тенкĕ мобилизацилес плана кăçалхи мартăн 1-мĕшне мĕнле пурнăçланине пăхса тухнă хыççăн Финанспа Банк ĕçĕнче ĕçлекенсен Союзĕн Обкомĕпе Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Красноармейски района пама йышăнчĕ (Райфо заведующийĕ Андреев). Çак район укçа-тенкĕ мобилизацилес ĕçре пуринчен малта пырать. Вăл массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарса, ял активне финанс ĕçне сарлакан явăçтарса укçа-тенкĕ мобилизацилес плана мартăн 1-мĕш тĕлне 108,2 процент тултарнă. Халĕ çав районра вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлесе татас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Обязательнăй йĕркепе тата хăйсен ирĕкĕпе тăвакан страховани планне кăçалхи мартăн 1-мĕш тĕлне мĕнле пурнăçланине пăхса тухнă хыççăн Финанспа Банк ĕçĕнче ĕçлекенсен Союзĕн Обкомĕпе Госстрах управленийĕ хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Вăрмар районне пачĕ (Райфо заведующийĕ Бикгимиров, Госстрахăн старши инспекторĕ—Семенов). Обязательнăй йĕркепе тата хăйсен ирĕкĕпе тăвакан страховани ĕçĕнче çак район паха тĕслĕхсем кăтартнă.

Укçа-тенкĕ мобилизацилес плана пурнăçлас тĕлĕшпе малта пыракан районсен шутне тата Тăвай районĕ кĕрет. (Райфо заведующийĕ Афанасьев). Çак районра укçа-тенкĕ мобилизацилес плана кăçалхи мартăн 1-мĕш тĕлне 108,2 процент тултарнă, вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлесе татас енĕпе те районри актив тăрăшса ĕçлет.

Укçа-тенкĕ мобилизацилес плана тултарас тĕлĕшпе тата вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлесе татас тĕлĕшпе çак районсем лайăх ĕçлеççĕ: Калинински, Чкаловски, Шăхасан, Вăрмар, Советски, Октябрьски т. ыт. районсем те. Çак районсен руководителĕсем вăхăтран вăхăта çеç мар, куллен-кун финанс ĕçĕпе интересленеççĕ. Вĕсем райфо ĕçне тĕрĕслеççĕ кăна та мар, ăна тăтăшах пулăшу парса пыраççĕ. Кунта колхозниксемпе единоличниксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн сарса янă, кунти финанс активĕ çирĕп.

Анчах та пирĕн республикăра укçа-тенкĕ мобилизацилес плана пурнăçлас ĕçре кая юлнă хăшпĕр районсем, ялсовечĕсемпе колхозсем те пур-ха. Йĕпреç, Шупашкар, Çĕмĕрле, Улатăр тата ытти хăшпĕр районсенче финанс ĕçĕ япăх пырать. Çав районсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе начар туса пыраççĕ, финанс оргăнĕсем финанс активĕпе куллен-кун ĕçлесе пымаççĕ, финанс ĕçне активистка-хĕрарăмсене сахал явăçтараççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ февралĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарпа Çĕмĕрле райфинпайĕсен заведующийĕсен Трофимовпа Захаров юлташсен доклачĕсене итленĕ хыççăн, вĕсен ĕçне япăх тесе хакларĕ, çав районсен руководителĕсене финанс ĕçĕнче татăклăн улшăну тума, ĕçе лайăхлатма, укçа-тенкĕ пухассин квартал планне пĕтĕмĕшпех пурнăçлама хушрĕ.

1942 çулти 1-мĕш квартал планне пурнăçлас срокăн вĕçне çитме ĕнтĕ уйăхран та сахалрах юлчĕ. Анчах та финанс планне тултарас енĕпе кая юлнă районсемпĕн, ялсовечĕсемпе колхозсемшĕн малашне большевикла тăрăшса ĕçлесен, малта пыракансен опычĕпе усă курсан,—çав вăхăт, кĕске пулсан та, финанс планне срокчен тата пĕтĕмĕшпех пурнăçлама çителĕклĕ. Пирĕн орденлă Чăваш республикинче пĕр çын та государствăна укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен парăмлă ан пултăр! Фашистсен урнă йыткĕтĕвĕсемпе татăклă çапăçу пынă вăхăтра пирĕн çĕршывăн кашни патриочĕн государствăна обязательнăй йĕркепе тӳлемелли парăмсене срокра çеç мар, срокченех тӳлесе татма тăрăшмалла.

Ялти агитациллĕ-массăллă тата политикăллă ĕçе сарса ярса, финанс активĕпе куллен-кун ĕçлесе пырса, республикăри финанс оргăнĕсем, районри партипе совет оргăнĕсен руководителĕсем пулăшса пынипе, укçа-тенкĕ мобилизацилес квартал планне, паллах, срокченех тата пĕтĕмĕшпех пурнăçлĕç, çапла вара пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара фашистсен урнă йыткĕтĕвне хăвăртрах аркатса тăкма пулăшĕç.

В. ТАВРИН.
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Мартăн 8-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва пурĕ 268 çын пухăннă тата Çĕмĕрлепе Советски районсенчен представительсем килнĕ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ И. Никитин юлташ иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсемпе кăçалхи çуракине хатĕрленесси çинчен доклад туса пачĕ. Ун докладĕнчен тата тухса каланă сăмахсенчен Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем иртнĕ çулта пысăк çитĕнӳсем тунни курăнчĕ.

Районри колхозсенчен 12 колхоз—«Память Ленина», «Совет», «Путь социализма», «Пятилетка» т. ыт. колхозсем те пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Çак колхозсенчен «Пятилетка» колхоз гектартан 27 центнер, «Люба» колхоз 20 центнер ытларах тĕштырă туса илчĕç.

Канашлура тухса калакансем хăйсен ĕçĕнчи паха опытсем çинчен ытларах чарăнса тăчĕç. Сăмахран, «Коминтерн» колхозри махоркосеод И. Сидоров юлташ хăй тухăçлă махорка туса илме пултарни çинчен каласа пачĕ. Вăл иртнĕ çулта гектартан 19 центнер махорка туса илес вырăнне 22 центнер таран туса илнĕ. Колхоз махоркăран кăна иртнĕ çулта пурĕ 15 пин тенкĕ таран тупăш илнĕ.

Тырпулсене вăхăтра пухса кĕртнипе пĕрлех, малта пыракан колхозсем иртнĕ çулти кĕракине те аван туса хăварчĕç. Кĕракинче районра планран ирттерсе пурĕ 733 гектар ытла хăварнă.

Халь районра çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕ пырать. Районри малта пыракан колхозсем çуракине, пĕтĕмĕшпе илсен, хатĕрленсе çитрĕç. Анчах пур колхозсем те мар-ха акана кирлĕ пек хатĕрленеççĕ. Уйрăмах «Трактор», Буденный ячĕпе тăракан тата Хĕрлĕ Чутай колхозĕсенче çуракине начар хатĕрленеççĕ. Канашлура тухса калакансем хăйсен ĕçĕсене критиклеснипе пĕрлех «Трактор» колхоз пек çуракине начар хатĕрленекен колхозсен ĕçĕсене те хытă критиклерĕç, начар ĕçлекенсене тимлĕн ĕçлеме чĕнчĕç.

Иртнĕ çулта районра 54 колхоз, 210 бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ. Халь колхозсем çав ăмăрту договорĕсене тĕрĕслеççĕ. Иртнĕ кунсенче çавăн пек «Память Ленина» колхозпа «Волна» колхоз хăйсен ăмăрту договорне тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслӳ «Память Ленина» колхоз ăмăртура мала тухнине кăтартрĕ.

Канашлура ăмăрту пирки те хытă калаçрĕç, иртнĕ çулти ăмăрту договорĕсене тĕрĕслесе тухса кăçал çĕнĕрен договорсем тума йышăнса хăварчĕç, пур колхозсене те ăмăртса ĕçлеме чĕнчĕç.

М. ТИХАНКИН.

ТРАКТОР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ИШЛЕЙ. РСФСР Сутĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă программа тăрăх вăтам шкулсенчи аслă классенче ялхуçалăх ĕçне вĕрентмелли занятисем пысăк çĕкленӳпе пулса иртеççĕ.

Çак ĕçе Тинĕшри вăтам шкулта аван йĕркеленĕ. Кунта VII—VIII классенче—ялхуçалăх ĕçне, IX—X классенче—трактор ĕçне вĕренеççĕ. Занятисем эрнере 2 хут икшер сехет пулса иртеççĕ. Тракторист П. Сорокин, ачасем трактор ĕçне лайăх ăнланса илтчĕр тесе, çине тăрать, тракторăн паллă пайĕсемпе ĕçĕсене хут çине сăрлатать. Вĕренекенсем ăна кăмăлласа, çавăнпа трактор ĕçне те тăрăшса тата ыратса вĕренеççĕ.

Д. ВАСИЛЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

хăйĕн аллипех Лашинские тата тепĕр 3 поляк салтакне — Алоиз Махула, Эдуард Посада тата Юзеф Пакулие çапăçăва кĕме килĕшменнишĕн персе вĕлернĕ.

* * *

Финляндире кунран кунах выçлăх вăйланса пырать. Финляндире тырпул запасĕсем пĕтнĕ. Финлянди хулисен полицейски управленийĕсем выçлăхпа вилнисене кашни кунах нумайшарăн регистрацилеççĕ. Çак инкеке сирсе яма хăтланса, Финлянди правительстви хресченсем çуракки валли хăварнă вăрлăха вĕсенчен туртса илет. Çавăн пирки чылай вырăнсенче пăлхавсем пулса иртнĕ. Хумппила хули çывăхĕнчи пĕр ялта ирĕксĕрлесех тырпула туртса илме пынă вичĕ шюцкоровецпа хресченсем хĕнесе тăкнă. Хресченсемпе полици тата шюцкоровецсем хушшинче юнлă çапăçусем пулса иртни çинчен Финляндин ытти районĕсенчен те пĕлтереççĕ.

* * *

Холмогорскри (Чита облаçĕ) тăхлан комбиначĕн забойщикĕ Осипов юлташ çак кунсенчен пĕринче хăйĕн сменăри нормине 1.820 процент, тепĕр забойщик Чернышев юлташ — 1.353 процент тултарнă.

Мартăн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем фронтăн чылай участокĕсенче малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Мартăн 6-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 35 самолет мар, 45 самолет пĕтерсе тăкнă.

Мартăн 7-мĕшĕнче нимĕçсенне 29 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 8-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Мартăн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 5 танкне, войскăсемпе груэсем турттаракан 375 автомашинине, боеприпассем турттаракан 100 лавне, горючи тултарнă автоцистернине, 25 орудине, зенитнăй пулеметсен 6 точкине, 29 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Противникăн 60 юланутçине тата пехотине виçĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Юшкевич юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçсем (Калинин фрончĕ) нимĕçсене халăх пурăнакан 9 пунктран хĕссе кăларнă, халĕ вĕсем малалла куçса пыраççĕ. Тăшманран тытса илнĕ трофейăсем хушшинче: 4 оруди, 17 пулемет, 9 автомат, 21 винтовка, 30.000 ытла патрон, 2 миномет, 30 лаша пур. Гитлеровецсен çĕршер салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлернĕ тата амантнă. Фронтăн çак участокĕнчех сержант Игинаткин орудирен тĕл персе противникăн «Ю-88» йышши самолетне персе ÿкернĕ, 3 летчика тыткăна илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 16-мĕш армине хупăрласа илнĕ çунка совет войскисем хĕсĕçсемĕн хĕссех пыраççĕ. Участоксенчен пĕринче противник хăйĕн икĕ батальонĕпе контратака туса пăхнă. Пирĕн пехотинецсемпе йĕлтĕрçĕсен батальонĕ нимĕçсене çавăнтах сирсе пăрахнă. Противник, çапăçу хирне хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 550 виллине çити пăрахса хăварса, каялла чакнă. Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра та вăйлă çапăçусем пыраççĕ, унта пирĕн чаçсем тăшманăн çирĕплетнĕ пунктсенчи гарнизонĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Халăх пурăнакан В. пунктшăн пынă çапăçура лейтенант Кокауров ертсе пыракан противотанковăй батарейăри боецсем нимĕçсен танксене хирĕç пемелли икĕ туппине, 2 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă, 7 блиндажне çĕмĕрнĕ тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Политрук заместителĕ Максаков юлт. ертсе пыракан твардеецсен группи виçĕ танк çине ларса нимĕçсен вăйлăн çирĕплетнĕ районне кĕтмен çĕртен çĕмĕрсе кĕнĕ. Пирĕн боецсем ДЗОТ-сене хăюллăн атакăланă, амбразурĕсене гранатăсем пăрахнă, 70 гитлеровеца ытла персе вĕлернĕ тата противникăн огневой точкисене çĕмĕрсе тăкнă. Çак çапăçура Максаков юлташ икĕ хутчен аманнă пулнă, анчах вăл çапах та çапăçу хирĕнчен тухман.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен Ф. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ хăйĕн боевой операцийĕнче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 772 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 69 автомашинине, 24 мотоциклне пĕтерсе тăкнă, боеприпассемпе горючин 5 складне çунтарса янă, чугунçул çинчи 5 кĕпере сирпĕнтернĕ, çар груэĕсем турттарса пыракан 5 эшелона ÿпĕнтерсе янă. Партизансем çакнашкал трофейăсем тытса илнĕ: 100 лашапа 120 йĕнер, 4 станковăй пулемет, 6 ручной пулемет, 150 винтовка, патронсемпе ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 134-мĕш пехотнăй дивизин 44-мĕш полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ фельдфебель Христиан Брюске çапла каласа панă: «Каялла чакнă чухне пирĕн дивизин питĕ пысăк çухатусем пулчĕç. Пирĕн противотанковăй батальонра 3 ротăччĕ. Кашни ротăрах 150-шар çын тата 12-шер тупă пулнă. Халĕ ротăсенче 50-шар çын тата 4—5-шер тупă кăна тăрса юлчĕ. Эпĕ службăра тăнă 11-мĕш ротăра халĕ 25 çынран ытла мар юлнă. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питех те пусăрăнса çитрĕç. Салтаксем пурте питĕ тарăхаçан, çиленекен пулса кайрĕç. Вăрçă çакăн пек вăраха кайнăшăн салтаксем çавтери тарăхса çитнĕ».

* * *

Нимĕçсен лейтенанчĕ Рудольф Шрапбер Фуле хулине хăйĕн аппĕ патне çапла çырса янă: «Эпир ĕнтĕ пĕр каçлă çĕр те кураймастпăр. Пирĕн лашасемпе машинăсем те çитмеççĕ. Вырăссем пирĕн çине тапăнсах пыраççĕ. Эпир тарса çеç аран-аран хăтăлкалатпăр. Пурне те пăрахса хăварма тиврĕ. Хамăн салтак кĕнекипе 186 марка укça та вырăссен аллине юлчĕ».

* * *

Харьков облаçĕнчи Близнецова районĕнчи Доброволье ялĕнчи çынсем акт çырнă. Унта вĕсем çакна палăрттунă: «Гитлерла бандитсем пирĕн ялта пурăннă вăхăтра шкул çуртне, МТС конторине, сельпо магазинне, почтăна, ачасен çуртне, 2 витене, 2 колхозăн конторисене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Нимĕçсем ялтан 70 ĕне, 30 сурăх, 80 сысна, чăхсемпе хурсем нумай илсе тухса кайнă. Фашистла ирсĕрсем пирĕн ял çыннисене Андрей Федотович Товстогрея персе вĕлернĕ, Т. С. Девяткăна, Ефросиния Нечепуренкона, унăн 12 çулти ывăлне, Л. С. Горбача тата ытти нумай стариксене, хĕрарăмсене, ачасене хĕнесе пĕтернĕ».

* * *

Бакури вагонсен участокĕнче ĕçлекен токарь Пиявкин юлташ, муфтăсемпе гайкăсем хăйраса, хăйĕн сменăри нормине 1050 процент тултарнă. Баку-Товарная станцинче ĕçлекен Яныкин юлташăн бригади, нефть турттарса каймалли черетлĕ маршрута вăхăтра йĕркелесе, нефть тултарассине норма тăрăх 4 сехет те 16 минутăра туса иртмелле вырăнне 30 минутăра туса ирттерсе паха рекорд тунă.

Мартăн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле совет войскисем, фронтăн чылай участокĕсенче нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем 3 кун хушши çапăçса тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çынна пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсемпе разведчиксен групписем нимĕçсен 6 ДЗОТне, 20 ытла блиндажĕсемпе землянкисене çĕмĕрнĕ.

* * *

Красноармеец-наводчик Петр Ощурков тăшман чаçĕ танксем пулăшса пынипе тунă контратакăна сирсе пăрахас тесе хăйĕн орудине уçă позицие илсе тухнă та противникăн танкĕсем çине тÿррĕн тĕллесе пеме тытăннă. Çак çапăçура пултаруллă пеме пĕлекен наводчик нимĕçсен икĕ танкне çунтарса янă.

* * *

Лопаев сержант орудийĕн огневой позицийĕ çине тăшманăн бомбардировщикĕсем пырса тапăннă. Вут хыптаракан бомбăсем лекнипе снарядсен ещĕкĕсене вут тивнĕ. Сержант Лопаев хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр вут çине сиксе ÿкнĕ те çулăма сÿнтернĕ, боеприпассене взрыв пулса сирпĕнессинчен çăлса хăварнă.

* * *

Нимĕç оккупанчĕсен тылĕнче Смоленск партизанĕсен Г. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ пысăк ăнăçлăхпа кĕрешет. Партизансем нимĕçсен боеприпассем усранă икĕ складне тата хĕçпăшалсен складне çунтарса янă, çĕре яхăн гитлеровеца вĕлернĕ, 140 винтовка, 5 ручной пулемет, темиçе ещĕк граната тата патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Герман Нивенер çумĕнче вăл хăйĕн пиччĕшĕ патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Герман çапла çырнă: «Пирĕн ротăна пĕтĕмпех пĕтерсе тăкрĕç. 27 унтер-офицертан 25-шĕ вилнĕ, 2-шĕ аманнă».

* * *

Румынсен ту çинчи стрелоксен 11-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Пырву Димитру çапла каласа панă: «Мана румынсен çарне январĕн 11-мĕшĕнче илчĕç. Çав кун çар присутствинче чăн-чăн базар пекех пулчĕ. Взятка паракансене çар службинчен хăварчĕç е тылри чаçсене ячĕç. Чухăн çынсене пимĕнле чире тата ухсах-тĕксеккине пăхмасăрах çар службине илчĕç. Эпĕ чирлĕ тата телефон çинчен те, йĕлтĕрсем çинчен те нимĕн те пĕлместĕп, анчах та ĕнеер, мана телефонист-йĕлтĕрçĕ турĕç. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта эпĕ январь уйăхĕн вĕçĕнче çитрĕм. Пире тÿрех çапăçăва хăваласа кĕртрĕç. Пирĕн рота вырăс пулеметчикĕсем кĕрсе ларнă кирпĕч заводне 3 хутчен атакăлама хăтланчĕ. Эпир питĕ вăйлă вут-çулăм айне пырса тĕрăнса, кашнинчех хамăрăн вилнисемпе аманнисене нумай пăрахса хăварса, каялла тарăмарĕç. Вырăссем наступлени пуçласа ярсан, саперсем çуртсене кĕрсе ларчĕç те пеме тытăнчĕç, кайран вырăссем хĕссе пырсан тухса тарчĕç. Нимĕç офицерĕсем пире те каялла чакма приказ пачĕç, анчах та эпир каялла чакмарăмăр. Вара нимĕç офицерĕ румын салтакĕсем кĕрсе ларнă çурт çине граната ывăтрĕ. Граната ванчăкĕсемпе 8 çын, вăл шутра сержант Балтяну та аманчĕ. Нимĕçсем темĕнле хонаса хĕратрĕç пулин те, пирĕн 11 çынтан тăракан ушкăн вырăнтан та тапранмарĕ. Эпир вырăссем пырса çитессе кĕтсе илтĕмĕр те хамăр ирĕкпех тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Карл Арнольд çумĕнче ун патне Штейнбергран ярăмĕ çырнă çырăва тупнă. Аххă мĕн çырать вăл ун патне: «Камăн мĕнле ăшă тумтир пур çакна пĕтĕмпех памалли çинчен эсĕ илтнĕ-и? Эсĕ каялла таврăначчен санăн ăшă тумтирсене пĕтĕмпех пуçтарса каяççĕ. Кам хăйĕн ирĕкĕпе памасть, вĕсенчен вăйпа туртса илеççĕ».

* * *

Борисоглебски машинно-тракторнăй мастерскойри мастер С. Т. Самохин токарнăй, фрезернăй, болторезнăй, расточнăй тата шлифовальнăй станоксене вĕренсе алла илнĕ тата тимĕрçĕ ĕçне вĕреннĕ. Самохин юлташ çак стахановсенчен кашниннех нормăна ирттерсе тултарать. Вăл рационализаторла 10-шар сĕнÿ панă. Унăн юлашки сĕнĕвĕ шестерня пăлĕсене касас ĕçе икĕ хут хăвăртлатма май панă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăшманăн тылĕнче пыракан партизанла кĕрешÿре хăйсене палăртнă партизансене орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăшманăн тылĕнче пыракан партизанла кĕрешÿре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă:

Ленин орденĕпе — Прасковья Андреевна Зиматовăна;

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 8 çынна;

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 13 çынна;

«Знак Почета» орденĕпе — 11 çынна;

«За отвагу» медальпе — 16 çынна;

«За боевые заслуги» медальпе — 21 çынна наградăланă. (ТАСС).

Вăрман хатĕрлевĕнче

ИШЛЕИ. Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта вăрман хатĕрлевне çителĕклĕн хутшăнаймарĕ. Çак ĕçре вăл кая юлса пычĕ. Колхоз руководителĕсем çак ĕçе кирлĕ пек хаклаймасчĕç.

Кăçал колхоз председателĕ К. Илюхин юлташ вăрман ĕçне хастарлăн тытăнчĕ. Кашни бригадăрах колхозниксем вăрмана ĕçлеме кайрĕç. Малтанах 80 çын тухăкчĕç. Вăрман ĕçне хутшăнакан колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Кирек мĕнле пулсан та, кунне 5 кубометр чухлĕ тăватăпах ĕнтĕ, — тет колхозник М. Алексеев юлташ. Унăн ывăлĕ те хăйпе пĕрлех вăрманта ĕçлет.

Вăрман хатĕрлесси — пысăк ĕç. Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çакна лайăх ăнланнă. Çавăнпа вĕсем вăрман ĕçне хастарлăн хутшăнса, плана тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

И. САМАРИН.

Фронт валли ăш-какăй

СОВЕТСКОЕ. «Цивильстрой» колхозран пример илсе, Мăн Ямашри «Заря» колхоз членĕсем фронт валли ăш-какăй хатĕрлеççĕ. Халĕ колхоз 10 сурăх, 15 чăхă самăртма тăратрĕ. Колхозниксем хаприхăй хуçалăхĕнче пĕрер чăх самăртаççĕ.

З. ВОЛКОВ.

Выранти промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем

Уральск хулинче çăкăр заводне ĕçе янă. Вăл талăкне 45 тонна продукци парать. Облаçра çĕнĕрен райпромкомбинатсемпе горпищекомбинатсем тунă. Колбаса изделийĕсем хатĕрлекен 7 цех тунă, супăнь тăвакан 3 цех, 5 столярнăй цех, çăмат-кĕççе йăвалакан 8 цех организациленĕ. (ТАСС).

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Риомри судăн мартăн 4-мĕшпе 5-мĕшĕнчи ларăвĕсенче суд авиаци министрĕ пулнă Ги ла Шамбра ыйтусем парса тĕпченĕ. Ги ла Шамбр суда хăй авиаци министрĕн вырăнне кĕнĕ вăхăтра, 1938 çулти январь уйăхĕ тĕлне, французсен авиацийĕ вăйсăр пулни çинчен каласа панă, çак тĕлĕшрен вăл хăйĕн айăпне пĕтĕмпех хăйĕнчен малтанрах авиаци министрĕ пулнă Пьер Кот çине йăвантарма хăтланнă. Ку енĕпе ăна прокурор та пулăшма васканнă: Ги ла Шамбр кунта Пьер Кота айăпланине эпĕ тĕрĕс тесе шутлатăп, тенĕ прокурор.

Малалли кăмахĕсенче Ги ла Шамбр хăйне тÿрре кăларма тăрăшнă: эпĕ Франци авиацине вăйлатас тесе тата авиаци промышленноçне ÿстерсе Францин çывлăшри вăйĕсене çĕнĕ йышши самолетсемпе пуянлатас тесе 5-мĕш №-лĕ план текен программăна срокра тултарма мĕн кирлине пурне те турăм, тенĕ вăл. Çавăн хыççăн Ги ла Шамбрпа прокурор хушшинче 5-мĕш №-лĕ плана тултарас ĕç мĕнле пыни пирки тавлашу тухса кайнă. Ги ла Шамбр Францире мобилизаци тунă вăхăта усă курма май пур самолетсем пĕтĕмпе те 494 самолет çеç пулнă тенипе килĕшмен. Вăл каланă тăрăх, мобилизаци пуçланнă вăхăтра Францин пĕрремĕш линире пулмалли самолетсем 1.470 пулнă. План тăрăх 1745 самолет кăлармалла пулнă, заводсем 1 625 самолет туса кăларнă. Прокурор 5-мĕш №-лĕ плана нумай кĕскерех срокра тултарма та май пулнă тенине хирĕç ответлесе, Ги ла Шамбр — авиаци производствине сарса ярас ĕç ерипен çеç пынăшăн промышленниксем, çавăн пекех аслă çар совечĕ тата хĕçпăшал кăларас ĕçсен министерствин тĕрлĕрен отделĕсем айăплă шутланаççĕ, тенĕ. Çак хушăрах Ги ла Шамбр — вăл хăй енчен аслă çар советне темĕн пек асăрхаттарнă пулсан та, мобилизаци тунă хыççăн авиаци заводĕсем хăйсенче ĕçлекенсен пĕтĕм составĕн виллĕкмĕш пайне çухатни çинчен каласа панă. Самолетсен конструкцийĕсене текех улăхлатса пыни те авиаци производствине хăвăрт вăйлатса пыма чăрмантарнă. Çакăнпа пĕрлех Ги ла Шамбр верховнăй командованине вăл штурмовой авиаци кирлĕ пуласса малтанах шута илменнишĕн тата çак авиацие тивĕçлĕ хак пама пĕлменнишĕн айăплать.

ЖЕНЕВА, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Риомри суд ĕçĕсем хăйсене кирлĕ пек пыман пирки гитлеровецсен хаçачĕсем çаплах хыттăн кĕвĕçсе çыраççĕ. Ку хаçатсем халĕ ĕнтĕ суд ĕçĕсем Берлинра палăртса панă пек пыманнишĕн хăйсем тарăхнине уççăнах палăртаççĕ. Германин ют ĕçĕсен министерствин официальнăй бюллетенĕ «Дейче дипломатише — политише корреспонденц» тÿрех çапла каласа çырать: çак суд Франци правительствин 1939 çулта Германи тĕрлĕ ыйтусемпе килĕшме кирлĕ пулнине кăтартса памаллаччĕ, «хăйĕн интересĕсене хăй территорийĕ çинче пуххса тăратса» Германие унăн Хĕвелтухăç Европăри политикине пурнăçа кĕртме кансĕрлеме кирлĕ мар пулнине кăтартмаллаччĕ. Анчах та халь çак судра, Франция çав политикăпа мĕншĕн «килĕшменни» çинчен мар, французсен Германие хирĕç кĕрешес ĕçре пулнă йăнăшĕсем çинчен сÿтсе яваççĕ, тесе тарăхать çак бюллетень. Малалла бюллетень Виши правительствине — Риомри суд Германие кирлĕ çулпа каймасан, Германипе Виши хушшинчи лару-тăру начарланать, тесе хăратать. «Риомри суд Франция Германипе килĕштерсе пурăнма тăрăшнине кăтартса паракан сăнавлă ĕç пулмалла» тесе çырать Германи бюллетенĕ.

Фашистсен хаçачĕ Риомри процесс пирки тарăхать

СТОКГОЛЬМ, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тидининген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Риомри процесс ăна организацилекенсем палăртса панă çулпа пыман пирки Берлинра хытах тарăхни сисĕнет; Риомри процеса Германи енчен критикăлассин ытларах та ытларах çивĕчленсе пырать. Гитлеровецсен «Фелькишер беобахтер» хаçачĕ хăйĕн редакцирен панă статьинче Риомри судьясене, вĕсем ĕçе Берлин кăмăлне килĕшмелле туса пыма пултарайманшăн, — вăрçă пуçланнăшăн Франция айăплă пулнине кăтартса паманшăн, — хыттăн вăрçса çырать.

«Даладьене, вăл фюрер панă сĕнÿсене йышăнманшăн мар, вăрçа начар хатĕрленнĕшĕн çеç айăплаççĕ», — тесе тарăхать çак хаçат. Суд ĕçĕсем çакăн пек йĕрне пыни ăнланма çук тĕлĕнмелле пулса тухать тесе шутлать хаçат. Юлашкинчен вăл, Риомри судьясене хăратса, суд малалла та иккĕмĕш вырăнта тăракан ыйтусене çеç сÿтсе явассинчен иртмесен, Германия çак суд çинчен вăл историллĕ фактсене пытарса хăварма тăрăшать тесе шутлассине пирки асăрхаттарать.

Фашистла ирсĕрсем Югославире 15.000 çынна асаплантарса вĕлернĕ

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи оккупанчĕсем Югославире 15.000 çынна асаплантарса вĕлернĕ. Çакăн пек тискерлĕхпе хăратса, вĕсем Югослави партизанĕсем фашистла бандитсене хирĕç кĕрешнине пусарса лартма шутланă. «Стокгольмс тидининген» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çырса пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем, кашни вĕлернĕ нимĕç çыннишĕн 100 югослава асаплантарса вĕлеретпĕр, тесе хăратаççĕ. Çапах та Югослави халăхĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешме пĕр куклăха та чарăнса тăмасть. Поездсем çине партизансем тапăннинчен хăраса, гитлеровецсем чугунçулсемпе шоссесем çумĕнчи мĕнпур вăрмансемпе вĕтлĕхсене икĕ енĕпе те касса тухма хушнă.

Хура тинĕсре Турци парохочĕ çине çĕнĕрен тапăннă

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Стамбулри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паллă мар националльноçăн подводнăй лодки Хура тинĕсре Турцин Болгари портĕнчен таврăнакан 2 пин тонна водоизмещениллĕ «Адана» ятлă парохочĕ çине тапăннă. Судно çавтери лайăх маневр тунипе çеç торпеда суднона лекеймен, торпеда судно çывăхĕнченех иртсе кайнă.

Çакна кура «Икдам» хаçат Турцин Хура тинĕсри территориллĕ шывĕсем çинче юлашки вăхăтра Турцин суднисене тапăннă паллă мар подводнăй лодкăсем камăн пулса тăнине палăртма кирли çинчен çине тăрсах çырать.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи вăрçă ĕçĕсем

Ливири тата Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи вăрçă ĕçĕсем юлашки эрнере çывлăшри вăйсен операцийĕсемпе çеç иртсе кайнă теме пулать.

Англи бомбардировщикĕсем кашни кунах противникăн Бенгази тата Триполи гаванĕсенчи карапĕсем пухăнса тăракан портсем çине бомбăсем пăрахаççĕ, çак майпа вĕсем Германипе Итали енчен Ливие çĕнĕрен войскăсем илсе пырассине чăрмантарма тăрăшаççĕ. Мартăн 3-мĕшĕнче çĕрле англичансен йывăр бомбардировщикĕсем Сицили çине пырса тапăннă, кунта Палермо портне тата ытти объектсене те ăнăçлăн атакăласа бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе Палермо портĕнче тата доксен механически мастерскойĕсемпе гидросамолетсем тăракан базăра пушарсем пуçланнă, вăйлă взрывсем пулнă. Ливи фрончĕн районĕнче Англин истребительнăй авиацийĕ англичансен тинçĕрти куçса çÿрекен отрячĕсене пулăшса тăрать.

Германипе Итали авиацийĕ англичансен Мальта утравĕ çине текех пыра-пыра тапăнать. Февраль уйăхĕнче Мальта çине сывлăшран 153 хутчен пырса тапăннă, çак вăхăтра Англин истребительнăй авиацийĕ противникăн 14 самолетне персе антарнă. Мартăн малтанхи числисенче çавăн пекех темиçе «Юнкерс» тата «Мессершмитт» самолетсене персе ÿкернĕ. Мальта çыне уйрăмăнах, мартăн 1-мĕшĕнче вăйлăн пырса тапăннă. Çав кун противникăн самолечĕсем унта кун каçиччен темиçе хутчен ушкăнпала умлăн-хыçлăн вĕçсе çитнĕ. Мальта çине тапăнăкан чылай самолетсем ... гражданăсен çурчĕсене сиенленĕ. Мартăн 3-мĕшпе 4-мĕшĕнче тĕнĕл державăсен самолечĕсем чылай вăхăт курăнман хыççăн, Суэц каналĕ çине пырса тапăннă тата мартăн 4-мĕшĕнчех Александрия хулин пысăк порчĕ çине те бомбăсем пăрахнă. Çапах та ку тапăнусенчен паллă сиенсемех пулман. Ливи фронтĕнче юлашки эрнере нимĕçĕнле улшăну та пулса иртмен. Икĕ енчен те патрульсем кăна çапăçаççĕ. Вăхăчĕпе Англи артиллерийĕ вăйлăн персе тăрать. Кунти фронтра юлашки кунсенче пулнă паллăрах çапăçу вăл — мартăн 3-мĕшĕнче Эль-Газаларан çурçĕрхĕвеланăç енче пулса иртнĕ çапăçу шутланать. Çакăнти çапăçура англичансем противникăн 12 танк пулăшса тăнипе çапăçакан пехотин 2 ротине хаяличчен йышăнса тăнă позицисенчен хĕссе кăларнă.

Ливи фронтĕнчи участоксенчен пĕринче французсен де Голль генерал ертсе пыракан войскисен колонни пырса çитнĕ. Ку войскăсен чаçĕ Англи çарĕсен операцийĕсене хутшăнса çапăçать. (ТАСС, мартăн 6-мĕш).

Ютçĕршывсенче

● Англире арçынсем валли призыв вăхăтне 45 çула çити ÿстерме приказ кăларнă. Ĕлĕк Англире призыва 41 çултан аслăрах арçынсене çара илмен.

● Перу сенатĕ правительство тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахасси çинчен тунă решение пĕр сасăллă пулса ырланă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Телеграммăсене пăхса тухни)

Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче юлашки кунсенче вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе чи паллă вырăн йышăнса тăнă участок вăл — Ява утравĕ шутланать. Голланди Индийĕн чи паллă центрĕсене — Ява тата Суматра утравĕсене вăрçăпа тапăнас хĕрушлăх Японин войскисем Сингапур утравне йышăнса илнĕренпех (февралĕн вăта çĕрĕнчен пуçласа) тухса тăнă.

Ява утравĕ çине тапăниччен малтан Япони войскисем Суматра утравĕ çине парашютлă десант антарнă, ку десант чаçĕсене тинĕс флочĕн операцийĕсемпе пулăшса тăнă, унтан Яварăн хĕвелтухăçĕнелли Вали утравĕ çине тинĕсрен десант антарнă.

Суматра утравĕ çинче Япония февралĕн 14-мĕшĕнче Палембанг хулин районне войскăсем кăларса хăварнă. Ку вăхăтра Сингапур утравĕ çинчи çапăçусем те пĕтменччĕ-ха. Тинĕс флочĕ пулăшнипе вăрçă ĕçĕсене сарса пырса, Япони войскисем Палембанг хулине тата çак хула çывăхĕнчи районсене тытса илнĕ. Палембанг — Голланди Индийĕнчи нефть кăларакан чи пысăк центрсенчен пĕри пулса тăрать. Çавăнпа та японецсем çак хулана Ява утравĕ çине тапăнма хатĕрленес майпа çеç мар, тата вăл экономика тĕлĕшпе паллă вырăн йышăнса тăнине шута илсе те тытса илме çине тăнă.

Февралĕн 20-мĕш числисенче Япони командованийĕ тинĕс флочĕн пысăк вăйĕсемпе десантлă чаçĕсене Вали утравĕ çине янă. Япони карапĕсен каравание союзниксен тинĕс флочĕпе сывлăшри вăйĕсем атакăланă, çапах та японецсем утрав çине десант антарса ăна унта çирĕплетсе тăратма пултарнă.

Ява утравĕ çинче Голланди Индийĕн столици — Батавия тата тинĕс çарĕн тĕп бази — Сурабайя хулисем ларaççĕ. Çавăнпа та Ява утравĕ çинчи çапăçусем Голланди Индийĕшĕн татăклă çапăçусем пулса тăраççĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче Японин тинĕс çинчи пысăк вăйĕсем Ява утравĕн çурçĕр-хĕвеланăç енчи çыранне пырса çитнĕ. Кунта союзниксен тинĕсри тата сывлăшри çар вăйĕсемпе японецсем хушшинче хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Японецсем, чылай çухату тунине пăхмасăрах, Ява утравĕн çурçĕр çыранĕнчи виçĕ пункта войскăсем антарнă. Утрав çинче çирĕпленсе çитнĕ хыççăн, японецсем унта шалтан малалла кĕрсе кайма тытăннă. Ку вăхăт тĕлне вĕсем стратеги тĕлĕшпе кирлĕ темиçе пункта тата Батавия хулине йышăнса илнĕ. Çапăçусем питех те вăйлă, питех те хаяррăн пыраççĕ.

Голланди Индийĕн войскисем японецсене хирĕç хытă çапăçаççĕ, ун пек хыттăн тăнине японецсем Малайăра та курман. Анчах та авиаци вăйлипе тата тинçĕрти войскисем йышлипе усă курса, Япони çарĕсем кунта та, пысăк çухатусене пăхмасăрах, ерипен малалла шăваççĕ.

Бирмăра вăрçă ĕçĕсем пуринчен ытларах фронтăн кăнтăр участокĕнче, Ситанг юханшывĕн анат енелли районĕнче вăйлăн пыраççĕ. Англи войскисем хăйсен юханшывăн хĕвеланăç çыранĕнчи позицине темиçе кун хушши тытса тăнă. Анчах та фронтăн пĕр участокĕнче японецсем шыв урлă каçма ĕлкĕрнĕ. Халĕ кунти çапăçусем пысăк чугунçул узелĕнчен Пегуран 15 километрта, çурçĕр-хĕвелтухăç енчелле пыраççĕ. Японецсем çапăнта çитсе пĕрĕннипе Рангунран Китая вăрçă материалĕсем турттармалли чугунçул тăрăх тата шоссе çулĕ тăрăх çÿресси чарăннă.

Филиппин утравĕсем çинче Америка войскисем çаплах хăйсен Батаан çурутравĕнчи (Лусон утравĕ) позицийĕсене тытса тăраççĕ. Çакăнпа пĕрлех Лусон утравĕн çурçĕр пайĕнче тата Минданао утравĕ çинче партизансен кĕрешĕвĕ аврлĕ çапăçусем пыраççĕ. Юлашки кунсенче Батаан çурутравĕнче тинçĕрти войскăсен паллă операцийĕсемех пулман. Америка командованийĕн Батаан çурутравĕнчи самолечĕсем мартăн 4-мĕшĕнче японецсен Субик заливне пырса кĕнĕ пароходĕсем çине тапăннă (Субик заливĕ — Батаан çурутравĕнчен çурçĕр енчелле). Кунта японецсем çĕнĕ десант чаçĕсене антарма тăнă. Самолетсенчен бомбăсем пăрахнипе Японин 12, 10 тата 8 пин тонна водоизмещениллĕ транспорт пароходĕсене тата темиçе пĕчĕкрех пароходa путарнă. Пароходсем çинчи войскăсен пысăкрах пайĕ шыва путса пĕтнĕ.

(ТАСС, мартăн 7-мĕш.).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПРИСТАНЬ ЧЕБОКСАРЫ
ДОВОДИТ ДО СВЕДЕНИЯ ВСЕЙ КЛИЕНТУРЫ, ЧТО
с 10 марта открывает ПРИЕМ ГРУЗОВ к отправлению, с сохранением их до открытия навигации.
—2 Пристань.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НĂ 868

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 268.